Пĕтĕм ... ...арисем, пĕрлешĕр!

Пĕр №-рĕ 10 пус

19-мĕш çул тухать

1937 октябĕр 23
ШАМАТКУН
244 (4756)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăран 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Национальнăçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен РСФСР Çуйлав Комиссийĕ составне çирĕплетесси çинчен

Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитет йышăннă
ПОСТАНОВЛЕНИ

„ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали Положенин" 38-мĕшĕпе 39-мĕш статйисем тăрăх, Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Национальнăçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен РСФСР Суйлав Комиссине общĕствăлă организацисемпе ĕçсынни общĕствисен çак представителĕсенчен çирĕплетме **йышăнать.**

Суйлав Комиссии председателĕ **Николайева** Клавдийа Ивановна—Профессилĕ союзсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Советĕнчен.

Суйлав Комиссии председателĕн заместителĕ **Вершков** Петр Афанасйевич—Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунисла Союзĕнчен.

Суйлав Комиссии секретарĕ **Скрынников** Семен Йемелйанович—Политикла-çутĕç учреждени работникĕсен профессилĕ союзĕнчен,

Суйлав Комиссии членĕсем:

Тарасов Михаил Петрович Чукунçул рабочисен профессилĕ союзĕнчен.

Казаков Александр Петрович—Ленинград хулинчи Киров заводĕнчи рабочисемпе служăщчисенчен.

Масленникова Йевдокийа Васильевна—Мускав хулинчи Дзержински йачĕпе тăракан Трехгорнăй пиравăр фабрикинчи рабочисемпе служăщчисенчен.

Михайлов Михаил Йефимович—Воронежри коммунисла организацинчен.

Сергейев Георги Сергейевич—ССР Союзĕн Оборонине тата авиаципе хими строительствине пулăшакан общĕствă (Осоавиахим) Тĕп Советĕнчен.

Алемасов Александр Михайлович—Тутар АССР-чи коммунисла организацинчен.

Смородин Петр Иванович — Сталинградри коммунисла организацинчен.

Стольаров Игнатий Петрович—Киров облаçĕн Шурмински районĕнчи „Новый путь" колхоз колхозникĕсенчен.

Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ
М. Калинин.

Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕшĕн РСФСР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕн членĕ—
А. Артюхина.

Мускав, Кремĕл.
1937 çулхи октябĕрĕн 20-мĕш.

ССР Союзĕн Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиссинче

Кăçалхи октябĕрĕн 19-мĕшĕнче ССР Союзĕн Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиссийĕн ларувĕ пулса иртнĕ.

Комиссии пичетсен образецĕсене пăхса тухса йышăннă: Тĕп Суйлав Комиссии вальли; Национальнăçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен республикăсенчи, облаçсенчи тата округсенчи суйлав комиссисем вальли; Союз Советне Суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиссисем вальли тата участкăсенчи суйлав комиссисем вальли. Участкăсенчи суйлав комиссисем вальли тунă пичетсене çывăх вăхăтрак выранĕсене йарса парăççĕ; ытти мĕн пур суйлав комиссисем вальли пичетсене выранĕсенче туса хатерлĕççĕ.

Суйлав участкисене номĕрлес йĕрке çинчен ыйту сÿтсе-йавса, Тĕп Суйлав Комиссии суйлав участкисене номĕрлессине кашни суйлав округĕнче уйрăмăн, Союз Советне тата Национальнăçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиссисен тумала, тесе йышăннă.

Комиссии облаçсемпе крайсене тата республикăсене хут тата суйлав докуменчĕсем тупса парас ыйтува пăхса тухнă. Тĕрĕслесен çакна палăртнă: Вăрман промышленнăç халăх комиссарĕ Иванов йулташ выранĕсене хут вăхăтра ситерессси çинчен правительствă хушнине пурнăçа кĕртмен. Тĕп Суйлав Комиссии округсенчи тата участкăсенчи суйлав комиссисене пĕтĕм кирлĕ суйлав докуменчĕсемпе хут çителĕкле тупса парас тĕлĕшпе ĕçсем туса çитерме палăртнă.

Суйлав кампанинче çыхăну мĕн тери пысăк выран йышăнса тăни паллă. Комиссии суйлав округĕсемпе участкисене тĕрлĕрен çыхăну хатĕрĕсем—радио, телефон, телеграф т. ыт. тупса парас ыйтува пăхса тухнă. Комиссии суйлав комиссисене суйлав йещчĕкĕсене пичетлеме кирлĕ сĕркĕче выранĕсене тийесе йани çинчен Центросоюз пĕлтернине итленĕ.

Тĕп Суйлав Комиссии суйлав докуменчĕсене хатĕрлевĕ чухне Армйан СС Республикĕнче тунă пысăк пăсăксем çинчен ыйту сÿтсейавнă. Суйлав докуменчĕсене (ССР Союзĕн Аслă Советне çуйланă чух участкăсемпе округсенче сасăланине çырмали протоколсем, суйлавçăсен списокисем тата шутлав листисем) пичетленĕ чухне Армените текстсене кирлĕ мар çĕртех кĕскетнĕ, йанăшсем тунă, суйлав докуменчĕсен формисен пĕрпек образецне пăснă. Тĕп Суйлав Комиссии Армйан СС Республĕкĕнче тунă йăшăнсене тÿрлетес тĕлĕшпе мерăсем йышăннă.

(ТАСС).

Пролетарилĕ столицă ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама хăйĕн кандидачĕсене тăратать

Октябĕрĕн 20-мĕшĕнче Мускавра привайхи виçĕ суйлав округĕнче ССР Союзĕн Аслă Совечĕн депутатне суйлама кандидатсем тăратассипе предприйати коллективĕсен пухувĕсем пуçланнă.

Столицăри Сталин, Молотов тата Пролетари суйлав округĕсенчи пысăк предприйатисенче рабочисемпе служăщчисен пухувĕсем пулса иртнĕ.

Сталин округĕнчи Куйбышев йачĕпе тăракан електрозаводра, ЦАГИ-н опытлă конструкцисен заводĕнче, Каганович йачĕпе тăракан прожектăр заводĕнче, Фрунзе йачĕпе тăракан заводра тата Балакиров йачĕпе тăракан фабрикăра ĕçлекен суйлавçăсем Союз Совечĕн депутатне суйлама хăйсен йенчен нихçан пулман çĕкленÿпе халăхсен çулпуçĕн Сталин йулташăн кандидатурине тăратнă. Суйлавçăсем Сталин йулташран пĕр сасăпах вăл Сталин округĕнче баллотировкăра тăма килĕшни çинчен хăйĕн шухăшне пĕлтерме ыйтнă.

Мускав хулинчи Молотов округĕнчи пысăк предприйатисем округран Союз Совечĕн депутатне суйлама пĕр сасăпах ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ В. М. Молотов йулташ кандидатурине тăратнă.

Пролетари округĕнчи йертсе пыракан заводсемпе фабрикисенчи рабочисемпе служăщчисем Союз Совечĕн депутатне суйлама пĕр сасăпах Л. М. Каганович йачĕпе тăракан государствă шарикпе подшибник пĕррĕмĕш завочĕн работницă пулнă П. Н. Пичугина йулташ кандидатурине тăратнă. Халĕ Пичугина йулташ—Мускав Совечĕн членĕ тата Мускав хулин Тагански райсовет председателĕ пулса ĕçлет.

(ТАСС).

Мускав ĕçхĕлăхĕ пĕтĕм совет халăхĕн сисĕмлехпе ирĕклĕхне кăтартать

ХАРЬКОВ, октябĕрĕн 21-мĕш (ТАСС). Мускав ĕçхалăхĕ йуратнă тусăн тата учителĕн Сталин йулташăн кандидатурине Союз Совечĕн депутатне суйлама палăртнă хыпар Харьковри предприйатисенче, учрежденисенче тата çар пайĕсенче пысăккăн хаваслантарнă тата савантарнă.

Харьковри трактор завочĕн плошчадĕнче нумай пинлĕ митинг пухăннă. Митингра тимĕрç цехĕнчи стахановец Татаренко йулташ çапла каланă:

— Сталин йулташ йачĕ—пĕтĕм ĕççыннисемшĕн чи хаклă йат. Епĕр аслă çулпуç Сталин йулташăн кандидатурине Союз Совечĕн депутатне суйлама палăртакан Мускаври Сталин суйлав округĕнчи ĕçхалăхне пĕтĕм чĕререн саламлатпăр.

Митингра йышăннă резольуцире çапла каланă:

„Мускаври Сталин суйлав округĕнчи суйлавçăсен сасси — пирĕн çĕршывăн нумай мĕлйунлă пĕтĕм халăхăн сасси пулать".

Леваневски йулташ самольотне шырама

Октябĕрĕн 21-мĕшĕнче ирхине Нарйан—Марта пулнă Чухновски йулташ отрйачĕн флагман карапĕ тата льотчик Фарих йулташ йертсе пыракан самольот çурçĕреле вĕçсе кайнă. Фарих йулташ самольочĕ Маточкин Шар çинчи аеродрома анса ларнă. Кунта Чухновски йулташ отрйачĕн тепĕр икĕ самольочĕ—Совет Союзĕн Геройĕ Бабушкин йулташăн „Н-211" тата Мошковски йулташăн „Н-212" самольочĕ ларăççĕ.

Чухновски йулташ самольочĕ Желани сăмсахне çитиччен вĕçсе пырса йăнăçлă анса ларнă.

(ТАСС).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Испани оборонă министерстви октябĕрĕн 19-мĕшĕнче пĕлтернĕ тăрăх, хĕвелтухăçри (Арагонири) фронтра Сарагосса хулинчен кăнтăрарах çапăçакан республикă çарĕсем Сулйеро йалĕ районĕнчи фашиссен темиçе позицине йышăнса илнĕ. Фуентес де Ебро йалĕ районĕнче республикă çарĕсем фашиссен 30 грузовиклĕ колонни çине пулеметсенчен персе пысăк сийен тунă.

Астурири фронтăн хĕвелтухăçри пайĕнче пысăк портлă Хихон хули çине тапăнса пыракан фашис çарĕсем Бискай заливĕн хĕрри тăрăх çаплах атакăсем тăваççĕ. Республикă çарĕсем сыхланма питĕ аван позици йышăннă. Вильчависпос хулинчен хĕвелтухăçĕнчи çÿлĕ вырăнсенче вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

Тĕпри (Мадридри) тата кăнтăрти фронтсенче лару-тăру улшăнмасăрах тăрать.

(ТАСС).

Испанири социалисла тата коммунисла партисен çыхăну комитечĕ пĕлтерни

ВАЛЕНСИ, октябĕрĕн 19-мĕш, (ТАСС). Социалисла тата коммунисла партисен çыхăну комитечĕ çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă:

„Çыхăнун нацилĕ комитечĕ хăйĕн йулашки ларувĕсенче икĕ партине пĕрлĕхлĕ тăвас ĕçре пулнă çитĕнÿсене тата икĕ партин организацисем пĕрле кĕрешесси çителĕклĕ вăйланса пынине палăртрĕ. Пирĕн çĕршыври мĕн пур халах массисен пĕрлĕхĕ тата пуринчен ытла социалисçемпе коммуниссен пĕрлĕхĕ фашисăма хирĕç кĕрешекен мĕн пур организицисен членĕсемшĕн çав тери кирлĕ. Епĕр, пирĕн туслăх пролетариатăн пĕрлĕхĕ партине тăвас çулпа ÿссе пынине тата вăл туслăх кунсеренех ăшшăн та тăтăклăн çирĕпленнине хаваслансa палăртатпăр. Вăл туслăха мĕн пур провинцисемпе огругсенче, пирĕн территорин мĕн пур инçетри кĕтесĕсенче, заводсенче, социалиссемпе коммуниссем пĕрле ĕçлекен вырăнсенче пур çĕрте те организацилĕ çыхăну комитечĕсем пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Икĕ парти хушшинчи хутшăнусене тата политикăлă пĕтĕмешлĕ линине çул кăтартса паракан нацилĕ комитетра, халăх фрончĕн правительствинче, епĕр пĕрле ĕçлени массăсен ирĕкне хисеплемеле тунă профсойуз пурнăçĕнче,—социалисçемпе коммуниссем пĕрле ĕçлени икĕ партине пĕрлештермели услови хатĕрлет. Рабочисен йышлă массисем те çавăн пек пĕрлештерессишĕн тăраççĕ. Икĕ партине пĕрлештерни пĕтĕм Испани халăхĕ пĕрлĕхлĕ пулмала тăвĕ, халăх фрончĕн вăйнĕ тĕреклетĕ".

Республикăлă Испанире ачасемшĕн тăрăшаççĕ

ПАРИЖ, октябĕрĕн 20-ш (ТАСС). Еспань агенстви пĕлтернĕ тăрăх, Республикăлă Испанире иртнĕ тăвата уйăх хушшинче алри ачасене пăхмали 66 центăр тунă. Мадридра пĕчĕк ачасене сыхласа усракан 17 пункт тунă. Вăл пунктсем 2 çул таранхи 18 пин ачасем хушшинче кашни уйăхра 240 пин литр сĕт валеçсе параççĕ. Кунсăр пуçне Мадридра нумай пулмасть тунă физиологипе апат-çимĕç гигиени институчĕ ĕçлет. Вăл институт хырăм чирĕпе асапланакан ачасене сыватать.



Капиталисăмла çĕршывсенче çар çыннисен суйлама та суйланма та права çук.

Совет çĕршывĕнче Хĕрлĕ çар командирĕсен, политработникĕсен тата бойецĕсен ытти граждансемпе пĕртан правасем пур. ССР Союзĕнче — пишĕр çар çыннисене Советсен депутатне суйланă.

Укерчĕк çинче: № чаçĕнчи чи лайăх командирсенчен пĕри, политикăна та вăрçă ĕçне вĕренес тĕлĕшри отличник, ССР Союзĕн Тĕпĕçтăвкомĕн тата Кийĕв хули совечĕн членĕ, орденоносец лейтенант Василий Йаковлевич Шчербак.

Л. Шульман-фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Йутçĕршыв делегацийĕ Октябĕр уйавне уйавлама

Нйу-Йорк, октябĕрĕн 20-мĕш (ТАСС). Мексика пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, ССР Союзне Мексикăран социалисăмла аслă революци 20 çул тултарнине уйавлама делегаци килет. Делегацире виçĕ çын. Унта учителсен профсойузĕнчен, çĕркăмрăкĕ кăларакансен профсойузĕнчен тата чукун çул çинче ĕçлекенсен профсойузĕнчен представителсем пур.

ВАЛЕНСИ, октябĕрĕн 21-мĕш (ТАСС). Испанири социалисла партин Ĕçтăвкомĕн ларувĕ пулса иртнĕ. Ĕçтăвком Совет Союзĕнче социалисăмла аслă Октябĕр революцийĕ 20 çул тултарнине уйавланă çĕрте пулма делегаци суйланă.

Германи ĕçхалăхĕн пурнăçĕ начарлансах пырать

ВЕНА, октябĕрĕн 20-ш (ТАСС). Швейцарин „Нейе Цÿрихер Цейтунг" хаçачĕ Берлинран илнĕ пысăк корреспонденцинче Германи ĕçхалăхĕн пурнăçĕ начарланасси çаплах тăсăлнине паллă тăвать. Корреспонденцире çар вальли тăвакан ĕçсем çине нумай укçа йанипе пурăнмали çуртсем тăвасси сисĕнмелех чакни çине кăтартса панă. Çак майпа хватер укçи, уйрăмах рабочисен хватерĕшĕн тÿлесси ÿснĕ. Рабочисемпе вак буржуазин нумай çемйисем Берлинри кивĕ пĕчĕк йавăç çуртсенче пурăнаççĕ. Вăл пÿртсенчен електричествăпа шыв пăркисене илнĕ. Рабочисен ĕçукçи начар апат çиме тата хватер укçи тÿлеме те аран-аран çиткелет. Çипуç-тумтирсемпе ытти кирлĕ йапаласене рабочисем апат çийессине хĕссе хăварнипе çеç илме пултараççĕ. Ĕçхалăхĕн ĕçукçи çаплах чакса пырать, тавар хакĕсем ÿсеççĕ.

Испани çĕршывĕсене Германипе Итали тытса илеççĕ

Лондон, октябĕрĕн 20-мĕш (ТАСС). Англири „Нйус Кроникл" хаçачĕн Парижри корреспонденчĕ, аванах пĕлетĕп тесе ĕнентерсе пĕлтернĕ тăрăх, Германипе Итали çарĕсен пĕрлештернĕ вăйĕсем Вăтаçĕр тинĕсри тата Испани хĕрринчи Балеар утравĕсем хушшинчи Колумбретес утравĕсене йышăнса илнĕ.

Ку утравсен ушкăнĕ шыв айĕнче çÿрекен кимĕсем вальли тата каталони хĕррисене хирĕç çапăçмалăх базă пулса тăрат.

69 мĕлйун та 979 пин гектар çинчи тырра çапнă

Октябĕрĕн 15-мĕшне Петĕм Союзри совхозсемпе колхозсем 69 мĕлйун та 979 пин гектар çинчи тырра çапнă. Авăн çапас плана 78 процент тултарнă. Октябĕрĕн 15-мĕшнех 34 мĕлйун та 261 пин гектар çине кĕрхи тырăсем акса плана 93 процент, кĕрхи çĕртмене 28 мĕлйун та 497 пин гектар сухаласа плана 41 процент тултарнă.



Краснооктябĕрски районĕнчи (Сталинград) депутаткă Н. И. Машкова ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленес тĕлĕшпе активлă ĕçлет. Йежов йачĕпе тăракан поçолкăри килхуçи арăмĕсемпе тата пенсионерсемпе вăхăтран вăхăта çĕнĕ суйлав саккунĕ çинчен калаçусем иртерет.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Н. И. Машкова (кĕнекепе) килхуçи арăмĕсене çĕнĕ суйлав саккунĕ çинчен ăнлантарать.

А. Макленов фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Вулав çурчĕсем, клубсем, библиотекăсем—суйлав саккунне пропагандăлакан центрсем пулмала

(Политикла-çутĕç работникĕсен республикăри канашлувĕнчен)

Чăваш АССР Çутĕç халăх комиссариачĕ октябрĕн 19—20-мĕшĕнче политикла-çутĕç работникĕсен республикăри канашлуне туса иртерчĕ. Канашлува райçутĕç пайĕсенчи политçут йĕнĕпе ĕçлекен инспекторсем, районсенчи культура çурчĕсен директорĕсем, библиотекăсемпе вулавçурт пуçлăхĕсем пуçтарăннă.

Канашлу пĕр ыйту сÿтсе-явре—вăл ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленнĕ май политикла-çутĕç учрежденисем умĕнче тăракан задачăсем.

„ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали Положенине" кашни суйлавçăна тĕплĕн ăнлантарса парас ĕç мĕнле пыни çинчен канашлу Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Канаш тата Тăвай районĕсенчи представительсен отчотне итлерĕ. Отчотсем тăрăх çирĕм çынна яхăн тухса каларĕç.

Сĕнтĕрвăрри райçутĕç пайĕн инспекторĕ Г. Шляпин юлташ отчочĕ тăрăх, Сталинла Конституципе суйлав Положенине ăнлантарса парас тĕлĕшпе районта хăшпĕр утăмсем туни курăнать. Кашни ял çумне пĕр ответлă учитель çирĕплетнĕ Суйлав Положенине вĕренекен ялти кружоксен руководителĕсене пухса темиçе хутчен канашлусем туса ирттернĕ.

Сталинла Конституципе суйлав Положенине вĕренме районта 453 кружок организациленĕ, вĕсенчен 326 кружок ялсенче, 127—хулара. Çав кружоксенче пĕтĕмпе 12.824 çын вĕренет. Ку çителĕклĕ мар-ха, мĕн пур суйлавçăсенчен 53 проценчĕ çеç кружоксенче вĕреннине пĕлтерет. Кружоксене çырăннисем вĕренме пурте мар çÿреççĕ (50—80 процент).

Ĕсмĕл ялсоветĕнче Сталинла Конституципе суйлав Положенине пропагандăлассине примерлă организациленĕ. Ялсоветĕнче 20 кружок. Ялсовечĕпе „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали Положени" брошюрăна 700 екземпляр сарнă. Вулав çуртне халăх нумай пырать, хытă интересленсе вулать.

Кĕчкейри вулав çурчĕ те лайăх ĕçлет. Избач Московский ю. кашни кас старниксемпе çамрăксене пуçтарса саспа вуласа парать, суйлав Положенине вĕренекен кружока йĕртсе пырать. Ку тарана çитиччен примерлă план тăрăх висĕ темă вĕренсе пĕтернĕ ĕнтĕ. Кружока çырăннисем пурте пекех вĕренме çÿреççĕ.

Анчах çавăн пек лайăх тĕслĕхсем районта сахал-ха.

Уракăвă ялсовет председателĕне Иванов юлташа кружока йĕртсе пыма хушнă. Анчах Иванов занятине пымасăр кружока аркатса янă. Кĕчкейри Васильев учитель те хăйĕн кружокĕнче ку тарана çитсе те пĕр занятие те ирттермен. Инструктивлă канашлусене те çÿремест.

Сĕнтĕрвăрринчи культура çуртĕнче Квасков текен культурник пур. Вăл бильярдла выльанисĕр пуçне урăх нимĕн те тумасть.

Парти Обкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ пленумĕ суйлава хатĕрленес ĕçре Тăвай, Шупашкар, Пăрачкав, Елĕк районĕсем уйрăмах хытă юлса пынине палăртрĕ. Чăнах та, Тăвай райçутĕç пайĕн инспекторĕ Федотов ю. хăйĕн „отчотĕнче" нимĕн çинчен те пÿтлĕн калаcа параймарĕ.

Пĕр вулав çурчĕн ĕçне те илсе кăтартаймарĕ. Тăвай районĕнче 520 çын пачах хут пĕлмеççĕ. Вĕсенчен пайанхи кун тĕлне 120 çынна вĕрентнĕ, ыттисене вĕрентекен çук. Бюджет тăрăх 1937 çулта хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕç валли 20 пин тенкĕ уйăрнă, ку таринччен 9 пин тенкипе çеç усă курнă. Тăвай районĕнче 10 уйăх хушшинче 120 çынна çеç вĕрентнĕ пирки, халь ĕнтĕ декабрĕн 12-мĕшчен—суйлавччен 400 çынна вĕрентмеле. Ку задачăна пурнăçа кĕртме пулать, анчах ĕçе большевикла тимлĕхпе тытăнни кирлĕ.

Шупашкар райçутĕç пайĕн инспекторĕ Филаретов ю. нимĕнле примерлă ĕç çинчен те калама пултараймарĕ. Районта 30 вулав çурчĕ пулсан, вĕсенчен 14-шĕ избачсемсĕр тăрса юлнă. Вулав çурчĕсем çумĕнче организациленĕ советсем ячĕшĕн çеç шутланса тăраççĕ, нимĕнле ĕç туни те çук.

Суйлав Положенине вĕренме района 324 участока çине пайланă. Вĕренÿве 3.240 çынна çеç явăçтарнă. 700 суйлавçă бюллетенсене хăйсем тĕллĕн тултарма пултараймаççĕ—хут пĕлмеççĕ вĕсем. Райçутĕç пайĕ вĕсене вĕрентме тăрăшмасть. 306 çынна вĕрентем пекки тăваççĕ, анчах хăçан вĕренсе çитесси паллă мар, мĕншĕн тесен занятисем час-часах аркана-аркана каяççĕ.

Республикăри политикла-çутĕç учрежденисенчен нумайĕшĕсем хăйсен умĕнче тăракан политикăлă пысăк задачăсене ăнланса илеймен-ха. Вулав çурчĕсем, культура çурчĕсем, библиотекăсем, колхоз клубĕсем Сталинла Конституципе суйлав Положенине пропагандăлакан центрсем пулса тăрайман. Политçут учрежденисене Çутĕç халăх комиссариачĕпе райçутĕç пайĕсем пит те çителĕксĕр йĕртсе пыраççĕ. Политикăлă агитацийе сарса яман ялсенче клас тăшманĕсем—пупсем, чиркÿ çыннисем, сектантсем—суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе хĕрсех ĕçлеççĕ. Сăмахран, Мăн Сĕнтĕрте Сокольский пуп чиркÿре мануфактурă сутма пуçланă, халăх пухăнсан Сталинла Конституци çинчен хăйне кирлĕ пек „ăнлантарса" панă. Пиньнă районĕнчен килнĕ пуп Çĕмĕрле хулинчи рабочисен хватерне пырса ача ячĕ хурса çÿренĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Вăтакасри Стенькă-тăван текен сектант халăха пухса вечĕрсем тăвать т. ыт. те.

Политçут учрежденисен хальхи вăхăтра Аслă Совета суйлама хатĕрленнинчен хисеплĕрех задачă урăх çук та. Политикла-çутĕç работникĕсен пĕтĕм вăйа, пĕтĕм пултарулăха Сталинла Конституципе суйлав саккуне пропагандăлас çĕре хумала.

С. Константинов.

Ленин-Сталин наци политикипе хавасланса пурăнакан ССР Союзĕн халăхĕсем ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама хаваслăн та тимлĕн хатĕрленеççĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Куйбышев ялсовечĕн председателĕ (Узбек ССР, Бухарски р.) Курбанов юлташ Орджоникидзе ячĕпе тăракан колхоз членĕсене çĕнĕ суйлав саккунĕ çинчен ăнлантарса парать.

И. Юсупов фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Тăхăр хĕр амăшĕ

Ганайева Натали Андрейевна пурăнакан Малиновка ялĕ пĕр пĕчĕкçĕ уçланкăра ларать. Кунта Турханган (район центрĕнчен) килес тесен вунултă километр уй урлă, сакăр километр сĕм вăрман урлă каçмала. Малиновка ялĕ, районри ытти ялсемпе танлаштарсан, район центрĕнчен чи инçетри ял вырăнĕнче шутланать.

Ганайева çемйи пурăнакан çĕнĕ пÿрт аслă урамра, хĕвеле хирĕç çуталса ларать. Урам йĕнче висĕ чÿрече. Шалта 4 пÿлĕм. Малти пÿлĕмĕ уйрăмăнах таса та çутă. Ку пÿлĕмĕн урайĕ сăрлă. Йĕри тавра тĕрлĕ чечексем. Стена çумĕнче ССР Союзĕн картти тата çулпуçĕсен сăнĕсем çакăнса тăраççĕ.

Çак пÿлĕмре ĕнтĕ Ганайевăн çемйи каççеренех пухăнса хаçат-журналсем вулать, радио итлет, шашкăла выльать. Çак пÿлĕмре ĕнтĕ Ганайевăн хĕрĕсем тĕрĕ тĕрлеççĕ, уроксене хатĕрленеççĕ.

Тулта—шартлама сивĕ. Декабрĕ. Хĕвел паçăрах сĕм вăрман хыçне аннă. Сĕтел йĕри-тавра сакăр хĕр ларса тухнă. Пурте вĕсем капăрланса тумланнă. Амăшĕ çук. Вăл больницăра. Вăл унта ача çуратать. Ăна илме ашшĕ колхозăн чи лайăх лашине кÿлсе кайнă.

Чÿрече каçмакĕ çумĕнчи будильник 6 сехет çывхарса çитнине кăтартать. Сĕтел варринчи радиоприйомник çине пĕр хускалмасăр тинкерсе пăхать сакăр хĕр. Акă радио кĕрлесе кайрĕ...

Мускав. Кремль. Дворец. Тăвăллăн алă çупни, урра кăшкăрни илтĕнет. Шăнкăрав шанкăртатать. Калинин лăпланма чĕнет. Кĕске сăмах калать вăл. Советсен Саккăрмĕш Чрезвычайлă Съесĕ уçăлнă тесе шутлать. Каллех тăвăллăн алă çупат Дворец. Урра кăшкăрать. Тĕрлĕ наци тĕрлĕ чĕлхепе сывлăх сунса пĕтĕм ĕçхалăхĕн Аслă çулпуçне Сталин юлташа саламлать.

Тепĕр 10—15 минутран Дворец лăпланчĕ. Шăп. Аслă Сталинăн доклачĕ пуçланчĕ. Çывăхрах пек вăл акă. Çывăхрах, акă хамăр умрах каласать. Унăн кашни сăмахĕ, кашни сăмахĕ ыттăн, чĕре тĕпне нихăçан манми ăшшăн кĕрсе вырнаçать.

Çак кас, етемлĕх историйĕнчи нихăçан манми кас, Аслă Сталин Аслă Конституци çинчен доклад тунă кас çуралнă Ганайевăн Розă ятлă тăххăрăмĕш хĕрĕ.

Унтанпа çулталăка яхăн вăхăт иртрĕ. Розă упаленет. Утасшăн тапаçланать. „Анне" тенĕ сăмахне те лайăххăх калать.

— Питĕ те çăмăллăн çуратрăм епĕ ăна,—тет Ганайева.—Çуратнă хыççăнах, Мускава итлеме хатĕрлен, тесе пĕлтерчĕç. Ман пеккисем больницăра татах та пурччĕ. Радио. Доклад. Сталин юлташăн сăмахĕсене итлетпĕр. Доклад пĕтнĕ хыççăнах çестрасем пырса мана пĕчĕкçĕ Розăна тыттарса хăварчĕç. Савăнăç. Мĕн тери хаваслăх. Хаваслансах киле кайатăп. Килти хĕрĕмсем—сакăр хĕр мана хирĕç тухса илчĕç. Итлерĕн-и... Сталин докладне итлерĕн-и, теççĕ. Хам та ыйтатăп: Итлерĕр-и?.. Итленĕ. Епĕр çеç мар вĕт, пĕтĕм Малиновкă ялĕ, пĕтĕм район, пĕтĕм республикă, пĕтĕм Совет Союзĕ вăл доклада итленĕ.

Савăнăçлăн каласать Ганайевă. Кашни хĕрĕн ятне чĕрери ăшă кăмăлпа асăнать. Акă, Розăн кĕçĕн аппăшĕ Галинă кăçал иккĕ тултарать. Тепри, виççĕмĕшĕ—тăваттăра. Тăваттăмĕшĕ ултă çулта. Пиллĕкĕмĕшĕпе улттăмĕш хĕрĕсем ялти шкулта вĕренеççĕ. Çиччĕмĕшĕ—Турханти вăтам шкулта. Саккăрамĕшĕ, Таня ятли, кăçал çеç-ха Шупашкара килсе рабфакăн иккĕмĕш курсне вĕренме кĕнĕ. Тăххăрамĕшĕ, чи асли, Маня ятли, Йĕпреçре телефонискă пулса ĕçлет.

Маня... Маня Аслă Октябрьпе пĕр тантăш. Аслă Октябрьпе пĕрлех вăл кăçал 20 çул тултарать.

— Ĕçлĕр, вĕренĕр!—тет Ганайева, хăйĕн юратнă хĕрĕсем çине пăхса.—Мĕнле тапхăрта пурăннине ан манăр. Çак тапхăр вĕт, Сталинла Конституци тапхăрĕ пирĕн çула уçрĕ, пире пур правасене те пачĕ. Ĕлĕк пулсан... Пĕр кĕтÿ хĕрарăм тенĕ пулĕччĕç пире. „Хĕрарăм çемйи... ăссăр çемье", тейĕчĕç. Çук. Халĕ ĕнтĕ вăхăт иртрĕ. Ленин кашни кухаркă патшалăха йĕртсе пыма пултартăр тени чăн-чăнах ĕçре пурнăçланчĕ. Акă часах суйлав пуçланать. Епĕр те арçынсемпе пĕр танах чи малтанхи сасса Ленин—Сталин ĕçĕшĕн юлашки юн тумламĕ юлмиччен кĕрешме хатĕр тăракансемшĕн паратпăр.

Сăмахне пĕтерчĕ Ганайевă. Çапсутă ялкăшса тăракан сăмаварне сĕтел çине килсе лартрĕ. Хăналанатпăр. Сĕтел тулли ĕçме çиме. Сĕтел йĕри тавра—телейлĕ çемье.

Радио репродукторĕ Коминтерн станци ĕçлеме пуçланине пĕлтерчĕ. „Çĕршыв юрри", Дунайевски композиторăн музыкĕ янтăраса кайрĕ. Итленĕçемĕн итлес килет. Çав вăхăтрах тăхăр хĕр амăшĕн çутă хĕвел пек савăнăçлăн çиççе тăракан сăн-сăпачĕ çине ăшă кăмăлпа пăхса илетĕн.

М. П.

Колхозниксен пуйан та культурлă пурнăçĕ

Аслă Чакри „Арлан" колхозра (Вăрмар р.) кăçалхи çул пысăк тухăçлă тырпул пуçтарса илчĕç. Кашни гектартан вăтам хисеппе 130—150 пăт тĕш тырă илнĕ. Колхозниксем ĕçкунĕ пуçне 22-шер кĕренке тĕш тырă илеççĕ. Çапла вара 700—800 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ колхозниксем М. Семйонов, М. Николайев 350—400-шер пăт тĕш тырă илмеле. Халĕ ĕнтĕ ĕлĕкхи пек „тырă çиме çитмест" текенсем пĕтрĕç. Коопераци урлă тырă сутма заявкăсем парса велосипедсем, патефонсем, кармуньсем, мануфактурă ыйтаççĕ.

Колхоз авăн çапса пĕтерсе, пахча çимĕçсене пухса кĕртрĕ. Халĕ ĕçкунĕ тăрăх тырпул тата 50-шар пус укçан валеçет.

Колхозниксем пур ĕçре те хаваслăн ĕçлерĕç. Çакăн пек лайăх, савăнçлă пурнăç туса панăшăн Сталин юлташа тав тăваççĕ.

В. Андрианов.

Районти промышленнăç

Патша самани вăхăтĕнче хальхи Йĕпреç районĕ вырнаçакан вырăнта нимĕнле промышленнăç та пулман. Çĕнĕ Чураш, Хурамал ялĕсенче катка-пичĕке тăвакан уйрăм алăсçăсем çеç пулнă. Унсăр пуçне пуянсен шыв, кĕрпе, çăм арманĕсем пулнă.

Революци пулнăранпа районта çĕнĕ промышленнăç ÿссе çитĕнчĕ. Октябрь революци пулни 20 çул тултарнă тĕле ку районăн промышленнăçĕ çулталăкра 5 мĕлйун тенкĕлĕх ытла продукци паракан пулчĕ. Промышленнăç уйрăмăнах вăрман пуйанлăхĕпе усă курас йĕнĕпе хыттăн ÿссе пырать. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш пятилеткă çулĕсенче заводсем туна, промысла ертелсем организациленĕ. „Кооплеспром" тата „Социалисăм" ертелĕсем явăçран 80 тĕрлĕ тавар кăлараççĕ. „Кооплеспром" ертелĕнче 645 çын членра тăрать. Ку ертел çулталăк хушшинче 1,5 мĕлйун тенкĕлĕх тавар кăларать. „Социалисăм" ертел 500 пин тенкĕлĕх таварсем парать.

Ку ертелсенче ĕçе те механизациленĕ. „Кооплеспром" ертелĕнче струшкă тăвакан станоксем 4 пур. Вĕсем ĕçленипе çулталăкра 600 тоннă струшкă кăлараççĕ.

Çак çулта музык инструменчĕсемпе ача-пăчасем валли выльамали: автобус, пукансем тăвакан производствăна организациленĕ. Квалификациллĕ мастăрсем пулман пирки малтанах ĕç ăнса пымарĕ. Халĕ ĕç лайăхланса пырать. Ку производствă çулталăкра музык инструменчĕсем 3 пин штукран кайа мар кăларма пултарать. Музык инструменчĕсене тума лайăх условисем пур. Чăрăш вăрманĕсем нумай.

Районра хăма çуракан завод ĕçлет. Анчах кунта производствă ĕçне йĕркелемен пирки ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ. Заводри механизмсемпе кирлĕ пек усă курмаççĕ. Ку завод хăйĕн тулли вăйĕпе ĕçлесен çулталăкра 1,8 мĕлйун тенкĕлĕх продукци кăларса тăма пултарать. Кăна вăл пурнăçа кĕртмест-ха.

Йĕпреçре кирпĕч тăвакан промысла ертелĕ пур. Вăл çулталăкра 1,5 мĕлйун кирпĕч туса кăлармала. Хальхи вăхăтра хăйĕн планне тултарса пыраймасть-ха. Çак çулта 1640 пин штук кирпĕч кăларас вырăнне 900 пин штук çеç кăларнă. Районра черепицă ĕçне вăйлатма та çителĕклĕ условисем пур.

Районри заводсемпе ертелсенче ĕç техникине пĕтĕмпех вĕренсе çитнĕ çынсем ÿссе пыраççĕ. Акă „Кооплеспром" ертелĕнче 26 çын стахановла ĕçлеççĕ. Струшкă станокĕ патĕнче ĕçлекен Васильева юлташ нормăна 168 процент, Йефремова 150,5 процент, Федорова 156,4 процент тултарса ĕçлеççĕ. Вĕсем халĕ Октябрь уявне çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Кунашкал лайăх тĕслĕхсем паракан рабочисем ытти заводсенче те, ертелсенче те пур.

Анчах районри промышленнăç плана тултарассипе кайа юлса пырать. Кăçалхи 9 уйăх планне 75,8 процент çеç тултарнă. Ку питех те килĕшÿсĕр. Ив. Алексейев.

Ачасем валли çуртсем

Çĕмĕрле хулинче нумай пулмасть ача çуратмали тата ачасен сачĕн çĕнĕ çурчĕсене тума пуçларĕç. Ача çуратмали çурта туса çитереççĕ те ĕнтĕ. Сидоров.

И. Золотников

Ĕлĕкхипе хальхи Шупашкар

Октябрьти Социалисăмла Аслă революциччен Шупашкар Хусан губернинчи уйес хули пулнă. Унта 5500 çын пурăннă. 1912—1913 çулсенче хулара хăма çуракан висĕ пĕчĕк завод тата спирт заводĕ пулнă. Вĕсем çулталăкра 733 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Хулара рабочисем пурĕ те 314 çын çеç шутланнă. Çак заводсем Йефрем тăвраш(с)ен, Губин тăврашĕсен тата Хлебников хуçасен аллинче тăнă.

Çак Йефремовсем, Губинсем, Хлебниковсемпе Ийевлĕвсем рабочисене питĕ хытă експлоатацилесе, вĕсен юнне ĕçсе пурăннă. Рабочисем 17—20 сехет ĕçленĕ, анчах вĕсем ĕçукçи питĕ сахал илнĕ.

Хулара аласта промышленнăçĕ те аталанайман. Хулара кирпĕч сарайĕсем 12 пулнă, вĕсем çулталăкне пĕр мĕлйун штук кирпĕч туса кăларнă. Явăç каскалакан мастерскойсем пулнă. Çĕрпÿпе Шупашкар уйесĕнчи ĕççыннисем чăпта çапса пурăннă. Анчах çак чăптасем хулари купцасен аллине пырса кĕнĕ, вĕсем услам илсе пурăннă. Çав купцасем чăваш ĕççыннисене пусмăрта тытса тăнă. Шупашкар хули—тырăпа услам тавакансен явĕ пулнă. Патша правительстви хунă явăр налогшăн ĕçхресченĕсем хăйсен юлашки тырпулĕсене Шупашкарти купцасене йÿнĕ хакпа килсе сутнă. Купцасем мĕлйуншар тенкĕ услам илнĕ, ĕçхресченĕсен семйисем выçă ларнă.

Шупашкартан Атăл шывĕ тăрăх грузсем те питĕ сахал турттарнă. Çапла, 1913 çулта Шупашкара пурĕ 51 пин тоннă груз килнĕ, 54 тоннă Шупашкартан тийесе янă. Шупашкарти суту-илÿ ĕçĕ Дрябловсем, Ийевловсем, Игумновсем купцасен аллинче пулнă.

Шупашкар хулин „илемлĕхĕ" — 14 чиркÿ, трактирсем, пивнойсем пулнă. Пĕр клуб та театр та пулман. Патша правительстви хула хуçалăхне йĕркелеме нимĕн чухлĕ те укçа паман. Хулари купцасемпе усламçăсем хулари ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе тăрăшман. Мĕншĕн тесен, вĕсене услам илсе пултăр, ĕçхалăхшĕн вилĕм пулсан та нимĕн те мар.

Çапла, 1912 çулта Шупашкар хулинче пурĕ 1202 çын вĕреннĕ, вĕсенчен пуçламăш шкулсенче 505 çын, хĕрарăм гимназинче 273, духовнăй училищăра 130 çын. Анчах çак шкулсенче ĕççынни ачисем вĕренмен, помещиксен, купцасен; пупсен, кулаксен ачисем вĕреннĕ. Рабочисемпе чухăн хресченсен ачисем çав шкулсене вĕренме кĕреймен, вĕсемшĕн шкул алăкĕсем хупă пулнă.

Хулари ĕççыннисене медицинă пулăшăвĕ парасси питĕ начар тăнă. Тĕлĕнмеле, 5.500 çын пурăнакан хулара пĕртен пĕр больницă пулнă, унта пĕр врач, 1 фельдшер, 2 фельдшерицă—аккушеркă ĕçленĕ. Кунсăр пуçне хулара пĕр амбулатори пеккинче пĕр фельдшер, пĕр аккушеркă ĕçленĕ. Консультаци ача амăшĕсемпе ачасене пулăшу парасси çинчен шутламалли те çук. Çакăн пирки те хулари ĕççыннисем питĕ нумай чирленĕ, çамрăк ачасем нумай вилсе пĕтнĕ.

Шупашкар хулинче революциччен: хула центрĕнче лачака пулнă, чул сарнă пĕр урам, пĕр пÿтлĕ кĕпер пулман. Хальхи Хĕрлĕ площадь пулнă вырăнта пасара килнĕ çынсем лашапа аран-аран ишсе тухнă. Хулара водопровод, канализаци, електростанци тăвраш пулман. Садсемпе бульварсем çинчен асăнмали те çук.

Хулан благоустройстви мĕнле тăнине çак фактсем лайăх кăтартса параççĕ. 1912 çулта хулари управă кĕперсене, тротуарсене, урамсене юсама пурĕ те 1050 тенкĕ çеç укçа пĕтернĕ. Садсемпе бульварсене тытса тăма çулталăкне те 7 тенкĕ çеç укçа расхутланă. Пĕвесем, çăлсем, каналсем тума 314 тенкĕ расхутланă.

Çапла пулнă Октябрь революцичченхи Шупашкар хули.

Пролетарилĕ Аслă революци пулни 20 çул тултарчĕ.

Ленин—Сталин парти йĕртсе пынипе пирĕн çĕршывра социалисăм тунă, експлоататăрла классене пĕтернĕ, тăшмансене çапса аркатнă. Пирĕн социалисăмла çĕршыври нумай мĕлйунлă халăх Октябрь революци 20 çул тултарнă уйава, унпа пĕрлех ССР Союзĕн Аслă Совечĕн суйлавне питĕ пысăк хастарлăхпа хатĕрленеççĕ.

Çак иккĕ историлĕ чаплă уйава, пĕтĕм халăх праçникне хаваcланса хатĕрленмеле те ĕнтĕ. Партипе совет влаçĕ пирĕн ĕççыннисене телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса пачĕç. Çакна пайанхи Шупашкартан, унăн 25 пинлĕ халăхĕн пурнăçĕнчен лайăх курма пулать.

Шупашкар халĕ мещансен, купцасен хули мар. Вăл Чăваш республикин политикăла, культурла, административлă-хуçалăхлă центрĕ. Пайанхи Шупашкара революцичченхи хулапа танаштарма май çук. Вăл пур йĕнчен те хăвăрт ÿссе пыракан социалисăмла хула.

Шупашкар хули Чăваш республики ÿссе пынипе пĕрле ÿссе пырать. Çĕтĕк-çатăк, кивĕлсе аннă çуртлă, пылчăклă, çырма-çатралă хуларан Шупашкар культурлă та илемлĕ хула пулса тăчĕ. Хулан промышленнăçĕ ÿсрĕ. Пĕрремĕш пятилеткă пуçламăшĕнче хула промышленнăçĕн продукцийĕ 3.209.000 тенкĕлĕх пулнă пулсан, 1937 çулти январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 11803 пин тенкĕлĕх туса кăларнă. Усĕм висĕ хут çура ытла. Пĕрремĕш пятилеткă пуçламăшĕ тĕлне рабочисем 627 çын хисепленнĕ пулсан, 1937 çулти январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 1600 çынна çитнĕ. Строительствăра 1300 рабочи ытла ĕçлет.

Хулара аласти промышленнăçĕ пысăк вырăнта тăрать. Тĕрлĕ ертелсенче 1000 çын ытла ĕçлеççĕ. Сĕтел-пукан тăвакан, çĕвĕ çĕлекен, атă-пушмак тăвакан, тимĕр-тăмăр мастерскойĕсем темиçе мĕлйун тенкĕлĕх продукци туса кăлараççĕ. Çав мастерскойсенчи производствă механизациленсе пырать.

Хулан коммунальнăй хуçалăхĕ нумай ÿсрĕ. Електростанци туса хута янă. Халĕ хулари ĕççыннисен çуртĕнче краççын мар, Илйич лампи çутатать. Водопровод хула халăхне талăкне 1500 куб. метр шыв парать. Водопровод кашни çулах вăрăмланса пырать. Çĕнĕ мунча тунă. Гостиницă пур. Çĕнĕ гостиницă тăвасси çинчен ыйту тăрать. Хулари çĕнĕ çуртсем: Пединститут, Кооптехникум, Ялхуçалăх институчĕ, Пичет çурчĕ, тĕрлĕ шкулсем, садсем, чул сарнă; явăç лартнă урамсем Шупашкара илемлетеççĕ.

Çак юлашки çулсенче пурăнмали çуртсем нумайланчĕç. Нумай çурт туса лартнă, 26 хватерлĕ тата 12 хватерлĕ çуртсене туса пĕтеретпĕр. 1937 çулта Атăл шыв транспорчĕн управленийĕ 11 хватерлĕ çурт тунă, Ялхуçалăх институчĕ 8 хватерлĕ, Заготзерно 8 хватерлĕ çурт тунă. Çуртйĕр тума кăçал темиçе мĕлйун тенкĕ расхут кăларнă. Çапла вара пурăнмали çурт вырăнĕ кăçал 91 пин тăваткал метра çитнĕ. Анчах та, рабочисемпе служащисене, вĕренекенсене пурăнмали çуртсем кирлĕ таран тата лайăх туса парас пулсан, нумай ĕçлемеле. Пирĕн çуртсене хăвăрт, йÿнĕ тата лайăх тăвассишĕн тăрăшмала.

Хальхи вăхăтра хула урамĕсене 11,4 километр чул йе шашкă сарса тухнă. Ĕлĕкхи пек лаша утса тухайман вырăнсем халĕ çук. Хулан тĕп урамне асфальт сарма тытăннă. Çĕтĕк-çатăк кĕперсене пĕтерсе, лайăх кĕперсем тунă. Акă пĕр факт. „Грязевская стрелка" текеннине илĕпĕр. Пĕр 3—4 çул кайала унта хватере каймасчĕç, мĕншĕн тесен касса çÿреме çул пулман. Халĕ вăл Чапайев ячĕпе тăракан посолăк, унта 1000 çын ытла пурăнать. Поссолка каймалли çул çинче 100 пин тенкĕ тăракан кĕпер тунă. Унтах магазинсем, лавкасем, киоскăсем, радио, телефон пур.

Çапла ĕнтĕ революциччен купцасем тата хула управĕ Шупашкар хулине йĕркене кĕртме 1000-шер тенкĕ укçа пĕтернĕ пулсан, халĕ мĕлйуншар тенкĕ пĕтеретпĕр. Ку вăл пирĕн партипе совет влаçĕ ĕççыннисене пурăнма, ĕçлеме, канма савăнма лайăх услови туса парассишĕн сталинла тăрăшнине кăтартать. Революцичченхи хулари купцасем—Йефремовсемпе Дрябловсем, Игуменовсем ĕççыннисен юнне ĕçсе пурăннă пулсан, халĕ социалисăмла хулари ĕççыннисем савăнса ĕçлеççĕ, савăнса канаççĕ, хăйсен хули хăвăрт ÿснишĕн тивĕçлипе мухтанаççĕ.

Шупашкара республикăн культура центрĕ тесе ахальтен мар калаççĕ. Хулара 4 аслă шкул, вĕсенче 1500 çын вĕренеççĕ. Вĕсем рабочисемпе колхозниксен, служащисен, совет интеллигенцин ачисем. Иккĕ техникум, музыкăпа театр училищи пур, вĕсенче 1000 çын ытла вĕренеççĕ. Ялхуçалăх, педагогикă, медицинă рабфакĕнче 750 çын вĕренет. Аккушеркă, права, хаçат, пропагандиссен шкулĕсем, тĕрлĕ курссем темĕн чухлĕ. Çак асăннă шкулсенче 4 пин çын вĕренеççĕ. Ĕлĕк çакна никам та ĕмĕтленме пултарайман! Сталинла саманра çеç пирĕн хуласем çакăн пек пысăк хăвăртлăхпа ÿссе пыраççĕ.

Хулари пуçламăш тата вăтам шкулсенче 3700 çын вĕренет. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш пятилеткă çулĕсенче хулари ачасем валли çĕнĕрен 6 шкул тунă. Вĕсенчен пĕри 630 ача вырнаçмалăх, тепри 480 ача вырнаçмалăх.

Библиотекăсемпе киоскăсем, театрсемпе клубсем, хĕрлĕ кĕтессем—çаксене пурне те хулари ĕççыннисем валли тунă. Пĕтĕм хула халăхĕ вĕренет. Ленинизма, парти историне, хăйĕн тăван çĕршывĕн историне, Сталинла Конституципе çĕнĕ суйлав саккунне темиçе пин çын вĕренет. Вĕсем хамăр тăван çĕршывшăн, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн тата лайăхрах, тата вăйлăрах кĕрешес тесе вĕренеççĕ. Рабочисем, служащисем, студентсем, килте ĕçлекен хĕрарăмсем докладсем, лекцисем, калаçусем итлеççĕ. Тĕрĕссипе каласан, Шупашкар вăл—шкул.

Çамрăксем ĕлĕкхи Шупашкарта пĕри те пулман. Тепĕр хут каласан: Çыхăну çурчĕ, Пичет çурчĕ, Пединститут, Ялхуçалăх институчĕ, Кооптехникум, 18, 20, 26 хватерлĕ çуртсем, електростанци, Кинотеатр, Колхозник çурчĕ, Поликлиникă, профсоюзсен çурчĕ, халĕ туса пĕтерекен банк, Чăвашсоюз çурчĕсем, Чăвашторг, Промсоюз магазинĕсем, куç больници, шкулсем, ача яслисемпе сачĕсем ĕлĕк пĕри те пулман. Вĕсене пурне те пĕрремĕшпе иккĕмĕш пятилеткă çулĕсенче тунă.

Çапла ÿсет çĕнĕ Шупашкар. Шупашкарпа Канаш хушшинчи чукунçула туса пĕтерни хулана тата пысăк хăвăртлăхпа ÿсме май парать.

ССР Союзĕн Сталинла Конституцийĕпе çĕнĕ суйлав саккунĕ хулари ĕççыннисен производствăлă тата политикăла хастарлăхне питĕ çÿле çĕклерĕ. Вĕсем партипе правительствă лартнă задачăна пурнăça кĕртессишĕн хастарлăн кĕрешеççĕ, суйлава хĕрсе хатĕрленеççĕ. Хулари ĕççыннисем ССР Союзĕн Аслă Советне Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекенсене суйлĕç. Вĕсем халăх тăшманĕсене: троцкисла-бухаринла бандăсемпе буржуалă националиссене нимĕн хĕрхенмесĕр çĕмĕрсе пырĕç. Шупашкар хулине тата вăйлăн ÿссе чечекленекен илемлĕ те культурлă хула туса хурĕç.

ПСÇЛКС Чăваш организацийĕн облăçри XIV-мĕш конференцийĕ ПСÇЛКС Обкомĕн отчотлă доклачĕ тăрăх йышăннă РЕЗОЛЮЦИ

Комсомолăн облăçри 13-мĕш конференцийĕ хыççăнхи ĕçсем çинчен ПСÇЛКС Обкомĕн отчотлă докладне итленĕ хыççăн, Чăваш организацийĕн облăçри XIV-мĕш конференцийĕ çамрăксемпе ачасене коммунисла воспитани парасси çинчен Сталин йулташ кăтартса панисене тата ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ, ПСÇЛКС X-мĕш Сиесĕ йышăннисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ПСÇЛКС Обкомĕ пачах çителĕксĕр ĕçленĕ тесе шутлать.

Конференци çапла шутлать: комсомол ĕçĕнчи тĕп çитменлĕхсем, ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн IV-мĕш Пленумĕ „Халăх тăшманĕсен комсомол ăшĕнчи ĕçĕсем çинчен" йышăннă решенире кăтартнисем, ПСÇЛКС Чăваш облăç организацине пĕтĕмĕшпех тивеççĕ.

Комсомолри халăх тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларас тата тăпалтарса пĕтерес тĕлĕшпе Чăваш республикĕнчи комсомол организацийĕ чăтма çук кайа йулнă, политикăлă суккăрлăх тата идиотла чир—тимсĕрлĕх ПСÇЛКС Чăваш организацийĕнче питĕ тарăн тымар йанă. Халăх тăшманĕсене—фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла агĕнчĕсене тата вĕсене пулăшакансене тăрă шыв çине кăларас ĕç ПСÇЛКС облăçри XIV-мĕш конференцинче çеç чăннипе сарăлма пуçларĕ.

Ку вăл ПСÇЛКС Обкомне ултавлă майсемпе халăх тăшманĕсем (Терентйев, Орлова, Йашевски т. ыт.) тата вĕсене пулăшакансемпе хÿтлекенсем (Сымокин, Чекмарйов) сĕтĕрĕнсе кĕнĕ пирки пулнă.

Комсомолăн руководствине хĕсĕнсе кĕнĕ халăх тăшманĕсем хăйсен агĕнчĕсене—троцкиссене, бухаринцăсене тата буржуалă националиссене комсомол организацийĕсен йертсе пыракан оргăнĕсене лартнă. Халăх тăшманĕсем, тем тĕрлĕ те хăтланса, комсомола партине хирĕç тăратасшăн пулнă, çамрăксемпе ачасен коммунисла воспитанийĕ çинчен, вĕсем хушшинчи политикăла ĕç çинчен ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ йышăннă решенисене пурнăçа кĕртессине аркатса пынă. Вĕсем колхозсенчи чылай пуçламĕш комсомол организацийĕсене, политикăла кружоксемпе шкулсен ĕçне, физкултурăпа оборонă ĕçне салатса йанă, техникăла вĕренÿпе пĕтĕмĕшлĕ вĕренĕве, çамрăксемпе ача-пăча литератури кăларассине аркатса пынă. Тем тĕрлĕ те хăтланса, вĕсем воспитани ĕçне пĕтерсе çамрăксене политика тата йăла тĕлĕшĕнчен пăсма тăрăшнă, ÿссе пыракан çĕнĕ кадрсене мала кăларма чăрмантарнă, ĕçе хăйсен çыннисене суйласа лартнă.

Çакăн пек пулма—ПСÇЛКС Обком бÿровĕнче большевикла критикăпа самокритикă пулманни, ПСÇЛКС Обкомĕнчи, хула комитетĕнчи тата райкомсенчи работниксем хушшинче ĕçлĕ хутшăнусене йăпăлтатуран, çемйелĕхрен, самокритикăна хĕснинчен, ĕçкĕ-çикĕрен пулакан туслă хутшăнусемпе улăштарни, кадрсене большевикла мар принципа суйласа вырнаçтарни, йертсе пыракан работниксем хăйсен пултарулăхĕсемпе пĕлĕвĕсене ытлашши пысăкка хуни тата çавна пула хăйсене хăйсем мăнаçланни, çулпуç вырăнне хума хăтланни, рйадовой комсомолĕссемпе активиссен опытне тата шухăшне тăнласшăн пулманни тата йертсе пырас ĕçри канцелйарлă-бÿрократла, чиновникла метăдсем май пана.

Конференци çапла шутлать: ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн феврал-мартри пленумĕн решенийĕсенче тата çак пленумра Сталин йулташ хăйĕн доклачĕпе йулашки сăмахĕнче парти организацисен ĕçĕсем йенĕпе палăртнă çитменлĕхсем, çавăн пекех тата ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн IV-мĕш пленумĕн решенийĕсенче палăртнă çитменлĕхсем Чăваш комсомол организацийĕнче анлăн сарăлнă. Устава калама çук пăснă, сойузăн шалти демократинкĕсĕсене çĕмĕрнĕ (кооптаци, назначени, комсомолĕссен масси умĕнче отчот туманни т. ыт. те).

ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕ йенчен Чăваш комсомол организацине халиччен пачах çителĕксĕр пулăшнă, тесе шутлать конференци. Чăваш республикĕнчи комсомол организацийĕн ĕç ыйтăвĕсене Тĕпком бÿровĕнче лартман.

Ленин—Сталин ĕçне пĕтĕм вăйне парса ĕçлекен Чăваш комсомолĕ çамрăксемпе ачасене коммунисла воспитани парас ĕçре партин шанчăклă помошникĕ пулса тăрать, социалисăм строительствин ответлă задачисене пурнăçа кĕртессишĕн большевикла кĕрешсе пырать. Чăваш республикĕнчи комсомолĕсем хушшинче йатлă колхозниксем—орденоносецсем, çĕршер стахановец, ударниксем пур.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн феврал-мартри пленумĕн решенийĕсем, çав пленумра Сталин йулташ кăтартнисем тата ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн IV-мĕш Пленумĕн решенийĕсем комсомол организацине комсомола хĕсĕнсе кĕнĕ халăх тăшманĕсене йăлт тăрă шыв çине кăларса аркатма хĕçпăшалланатарăççĕ.

Халăх тăшманĕсене—троцкиссене, бухаринцăсене, буржуалă националиссене—фашисăм агĕнчĕсене тăрă шыв çине кăларассине тата вĕсене пĕтĕмĕшпе аркатса тăкассине, комсомолри сăтăрлă ĕç йулашкисене пĕтерессине, большевизăма вĕренессине тата ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавне хатĕрленсе ирттерес ĕçсене ПСÇЛКС облăçри XIV-мĕш конференцийĕ тĕп задачă вырăнне лартать.

Çакна шута илсе, комсомолăн облăçри организацийĕ умне конференци çак задачсене кăларса тăратать:

1. Комсомола тата чи малтан комсомолăн йертсе пыракан активĕ хушшине хĕсĕнсе кĕнĕ пĕтĕм халăх тăшманĕсене тата вĕсене пулăшакансене тăрă шыв çине кăларса тăпăлтарса тухмала. Политикă тĕлĕшĕнчен тимсĕр, суккăр пулнисем, çавар карса ларнисем, ĕçкĕ-çикĕ тунисем тата йăла тĕлĕшĕнчен пăснисем çине комсомол организацийĕ йенчен чăтăмсăр пăхмала тăвас пулать.

Конференци комсомолри буржуалă националиссене тăрă шыв çине кăларса тăпăлтарас тĕлĕшпе ĕçлеме пуçламанпа пĕрех тесе шутлать, Обкома, райкомсене, хула комитетне, пуçламĕш организацисене тата кашни комсомолĕса буржуалă националиссене хирĕç, вĕсене чăваш халăхĕн хайар тăшманĕсем вырăнне хурса, тимлĕн кĕрешсе пыма хушать. Халăх тăшманĕсен комсомолри шпионла-сăтăрлă ĕçĕсем çинчен анлăн ăнлантарса, кашни комсомолĕса халăхăн пĕтĕм тăшманĕсене хирĕç кĕрешме хĕçпăшаллантармала.

2. Комсомолĕссен политикăлă вĕренĕвне тĕпренех лайăхлатмала, комсомолри пропагандиссен составне тăшманла елементсенчен тасатмала. Политикăла вĕренÿ шкулĕсемпе кружокĕсенче ĕçлеме лайăх хатĕрленнĕ тата тĕрĕсленнĕ пропагандисла кадрсене лартмала тата кирлĕ литература, пăхса вĕренмели пособисем памала. Облăçри тата районри актива пропагандă ĕçне тÿррĕмĕн хутшăнтармала, пропсеминарсен ĕçне тата пропагандиссен вĕрентĕвне организацилемеле.

3. Йертсе пырас ĕçе комсомолĕссене хăйулăрах кăларса пымала, вĕсене, уйрăмăнах ĕçе çĕнĕрен лартнисене, большевикла воспитани парас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемеле, вĕсене кирлĕ пĕлÿсемпе хĕçпăшаллантармала,—хамăр çĕршыври тата урăх патшалăхсем хушшинчи лару-тăрăва тĕрĕс тавçăрса илме, халăх тăшманĕсен пур хăтланăвĕсене те çийĕнчех сиссе тăрă шыв çине кăларма тата партипе комсомолăн решенийĕсене çапăçулăн пурнăçлама пултарччăр вĕсем.

4. Колхозсенчи комсомол организацисене пур йенчен те тĕреклетмеле, вĕсен кĕрешÿ пултарулăхне пур майсемпе хăпартмала. Комсомолăн колхоз çамрăкĕсем хушшинчи влийанине вăйлатмала, колхозсенчи комсомол организацийĕсен йышне ÿстермеле, пур колхозсенче те пуçламĕш комсомол организацийĕсем тумала.

5. Комсомолĕссене ПСК(б)П ретне хутшăнтарас тĕлĕшпе комсомол организацийĕсен ĕçне вăйлатмала. Комсомол активĕ хушшинче парти уставне, программине тата историне вĕренес ĕçсене организацилемеле. „Комсомолĕс ПСК(б)П членĕ пулассине хăйĕншĕн калама çук пысăк хисеп вырăнне хурать, хăйĕн пĕтĕм ĕçĕпе тата вĕренĕвĕпе хăйне унăн ретне кĕме хатĕрлет" — çакăн çинчен комсомолĕссене ăнлантарса памала. Партине илме сĕнекен çынсене кашнине тĕплĕн тĕрĕслемеле.

6. Аслă Совета суйлас ĕçе комсомолăн питĕ активлăн хутшăнмала. Комсомол организацийĕн пĕтĕм комсомолĕссемпе сойузра мар çамрăксем тата пĕтĕм халăх хушшинче Сталинла Конституципе Аслă Совета суйламали Положенине вĕренессине организацилемеле, çамрăк суйлавçăсем хушшинче политикăлă агитаци ĕçне сармала. Комсомол райкомĕсен тата облăçри комитетăн çак ĕçе тума пропагандиссем, агитатăрсем, вулавçăсем тата беседчиксем хатĕрлемеле тата вĕсене инструкцилесе пымала. Çамрăк депутатсемпе ĕçлессине лайăхлатмала.

7. ВУЗ-семпе шкулсенчи комсомол организацисен ĕçĕсене çирĕплетессипе лайăхлатасси çине уйрăмах çаврăнса пăхмала, комсомол организацисен вĕренекен çамрăксем хушшинчи влийанине çирĕплетсе сармала, çамрăк учительсемпе ĕçлессине вăйлатмала, вĕренекенсемпе учительсене—вĕренекенсемпе учительсен хăшпĕр пайĕнчи тăшманла, халăха хирĕçле шухăшсемпе кĕрешме мобилизацилемеле. Халăх тăшманĕсене—троцкиссене, бухаринцăсене тата буржуалă националиссене совет шкулĕсенчен пурне те хăваласа кăлармала.

8. Физкултурăпа оборонă организацийĕсене комсомол активĕнчи ĕçре тĕрĕсленнĕ, пултарулă работниксемпе çирĕплетсе, физкултурăпа оборонă ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтермеле. Хутла пĕлменлĕхпе хутла сахал пĕлнине пĕтерес ĕçе, уйрăмах допризывниксем хушшинче, татăклăнах лайăхлатмала.

9. Конференци комсомол организацийĕсене агитколлективсемпе, агитатăрсемпе, политбеседчиксемпе ĕçлессине вăйлатма, стена хаçачĕсен ĕçне хастарлă хутшăнма, пуçламĕш организацисен, комсомол активĕн тата çамрăксен пухăвĕсенче докладсем лартса, калаçусем, лекцисем туса ирттерсе, комсомолĕссене тата сойуз тулашĕнчи çамрăксене партипе правительствă решенийĕсем çинчен, ССР Сойузĕн тĕнчерипе шалти лару-тăру ыйтăвĕсем çинчен, кулленхи политикă çинчен, буржуалă разведкă агĕнчĕсен шпионла-сăтăрлă ĕç метăчĕсем çинчен вăхăтра ăнлантарса пама хушать.

10. ПСÇЛКС Обкомĕпе райкомсем тата хула комитечĕ çамрăк хĕрарăмсен сиесĕн тата хĕрачасен районри пухăвĕсен решенийĕсене пурнăçа кĕртмен. Хĕрсемпе, уйрăмах ача амăшĕ пулнă комсомолкăсемпе ĕçлессине начар йеркеленĕ. Конференци ПСÇЛКС Обкомне, хула комитетне тата райкомсене хĕрсем, килте ĕçлекен çамрăк хĕрарăмсем, работницăсемпе колхозницăсем хушшинче политикăла тата техникăла вĕренÿ ĕçне организацилеме, вĕсене общĕствăлă ĕçе хастарлăн хутшăнтарма, вĕсенчен лайăх ĕçлекеннисене, ĕçре тĕрĕсленнисене йертсе пыракан ĕçе лартма хушать.

ПСÇЛКС организацисен йăлти йаçлĕсен, ача сачĕсен, пÿлĕмĕсен, площчадкисен ĕçĕсене тата ача амăшĕ пулнă комсомолкăсем хушшинчи ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмала.

11. ПСÇЛКС Обкомĕпе райкомсем тата хула комитечĕ стахановла йухăма начар йертсе пыраççĕ, тесе шутлать конференци. ПСÇЛКС организацийĕсенче (Куславкка, Канашри вакунсем йусакан завод, Çĕмĕрле комбиначĕ, Улатăрти паровозсем йусакан завод тата ыт. те) стахановецсен йышĕ çамрăк рабочисен шучĕпе ÿсесси çителĕксĕр пырать. Предприйатисенчи, транспăртри, колхозсенчи, совхозсенчи тата МТС-сенчи сăтăрлă ĕçсен йулашкисене пĕтерме ПСÇЛКС организацийĕ начар мобилизациленнĕ. Конференци комсомол организацисене пурне те комсомолăн производствăри, стахановла йухăмри, çамрăксен Октябĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăвĕнчи авангардлă ролне хăпартма, промышленнăçпа йалхуçалăхĕнчи çамрăк специалиссемпе ĕçлессине вăйлатма, рабочи, колхоз, совхоз çамрăкĕсене техникăна тата агротехникăна вĕрентес ĕçе организацилеме, комсомолĕссемпе çамрăксене изобретательствăпа рационализаци ĕçне хутшăнтарма, государствăпа ĕç дисциплинисене çирĕплетессишĕн тата сăтăрлă ĕçсен йулашкисене хăвăрт пĕтерессишĕн кĕрешĕве мобилизацилеме хушать.

Конференци республикăри комсомолĕссемпе çамрăксене Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строительствине хастарлăн хутшăнма, унта комсомолла бригадăсем туса ĕçлеме, комсомолĕссене чи малтан механисăмсем çинче ĕçлеттермеле тума чĕнет.

12. Пионер организацисемпе ача-пăча учрежденисен кадрĕсем (Ача-пăча театрĕ, Çĕрпÿри ачасен хули т. ыт. те) тăшманла етемсемпе çÿпĕленнĕ. Çавăнпа та политикăла воспитани, тĕне хирĕçле, интернационаллă воспитани ĕçĕ начар тăрать, пионер отрйачĕсене халăха хирĕçле влийани кĕнисене, пионер отрйачĕсем саланса кайнисене кăтартакан тĕслĕхсем пур.

ПСÇЛКС Обкомне, хула комитетне, райкомсене—пионер организацисемпе ача-пăча учрежденисенче ĕçлекен кадрсене тăшманла етемсенчен тасатма, унта ачасене коммунисла воспитани парас задачăна пурнăçа кĕртме пултаракан, ĕçре тĕрĕсленнĕ работниксене суйласа лартма хушать конференци.

13. ПСÇЛКС организацийĕсенче интернационаллă воспитани ĕçне йăпăхтарнине палăртса, конференци ПСÇЛКС Обкомне, райкомсене тата хула комитетне интернационаллă ĕçе вăйлатма, Чехословаки комсомолĕпе çыхăну тытассине тата шеф ĕçне çĕнĕрен пуçарма, МОПР ĕçне йĕркелеме хушать, çамрăксене капиталисăмла çĕршывсенчи ĕç çамрăкĕсен пурнăçĕпе революцилĕ кĕрешĕвĕ çинчен, уйрăмăн илсен, Испанипе, Китай халăхĕсем ирĕке тухасшăн кĕрешни çинчен ăнлантарса памала.

14. Çăмăл кавалери групписене, ĕçре конкретлă тата оперативлă йертсе пырса, çирĕплетмеле.

15. „Çамрăк колхозник" хаçат фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла агĕнчĕсене тата вĕсене пулăшакансене тăрă шыв çине кăларса, тымарĕпех тăпăлтарса тăкас тĕлĕшпе комсомол организацисен кĕрешĕвне йертсе пыман, тесе шутлать конференци. „Çамрăк колхозник" тата „Пионер сасси" редакцийĕсен аппарачĕсем тăшманла етемсемпе (Йашевски, Орлова, Митрофанов, Зорин т. ыт. те) çÿпĕленнĕ. Конференци ПСÇЛКС Обкомне „Çамрăк колхозник", „Пионер сасси" хаçатсемпе „Хатĕр пул" журнала большевикла йертсе пыма, редакцисене партири тата комсомолри çирĕп, ĕçре тĕрĕсленнĕ кадрсемпе çирĕплетме хушать.

Комсомол хаçачĕсемпе журналĕсен идейлăхĕпе политикине хăпартасси, вĕсене большевикла критикăпа самокритикăна саракан, массăпа тачă çыхăну тытакан тăвасси тата çамрăк корреспондентсем хушшинче ĕçлесси çине ПСÇЛКС Обкомĕн уйрăмăнах çаврăнса пăхмала. Конференци ПСÇЛКС Обкомне ПСÇЛКС Тĕпкомĕ умне, „Çамрăк колхозник" хаçатпа пĕрлех, çамрăксем вулли вырăсла хаçат кăларасси çинчен ыйту лартма хушса хăварать.

Конференци ПСÇЛКС Обкомне ПСÇЛКС Тĕпкомĕ урлă Чăваш республики валли „Комсомольская правда" тата „Пионерская правда" хаçатсен лимитне пысăклатмала тума хушать.

16. ПСÇЛКС Обкомĕпе райкомсем комсомолĕссемпе сойузра тăман çамрăксем хушшинче тĕне хирĕçле пропагандă тăвассине хак паман. ПСÇЛКС организацийĕсем Вăрçăлă Турасăрсен Сойузĕн ĕçне, шкулсен, вулав çурчĕсен тата клубсен тĕне хирĕçле ĕçне начар хутшăнаççĕ.

Конференци ПСÇЛКС Обкомне, хула комитетне, райкомсене тата пуçламĕш организацисене çамрăксем хушшинче тĕне хирĕç ĕçлессине татăклăнах вăйлатма, тĕне хирĕçле темăсем тăрăх лекцисем, докладсем организацилеме, комсомолĕссемпе çамрăксенчен тĕне хирĕçле пропагандă тума агитатăрсем, беседчиксем хатĕрлеме, Вăрçăлă Турасăрсен Сойузĕнче хастарлă ĕçлеме, тĕн коммунисăма хирĕçли çинчен, чиркÿ çыннисемпе сектантла ушкăнсен контрреволюцилĕ ăшчикки çинчен ăнлантарса пымала.

17. ПСÇЛКС Обкомĕ йенчен транспăртри организацисене пуçĕпех çителĕксĕр йертсе пынине палăртса, конференци Обкома тата райкомсене транспăртри организацисене йертсе пырассине татăклăнах лайăхлатма хушать.

Шкулсем уйава хатĕрленеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ („Чăваш Коммунĕ" корр.). Аслă пролетарилĕ революци XX çул тултаракан уйава шкулсем тимлĕн хатĕрленеççĕ.

1-мĕш номĕрлĕ вăтам шкулта уйава хатĕрленме йатарласа комиççи уйăрнă. Комиççи план тăрăх ĕçлесе пырать.

Пайанхи куна шкулта драмă, физкултурă, ПВХО кружокĕсем ĕçлеççĕ. Драмă кружокĕ Кузнецов вĕренекен йертсе пынипе И. Всеволожскин „Детство маршала" пйесине лартма хатĕрленет, 2 хутчен репетици тунă та ĕнтĕ. Физкултурăпа санитари ĕçне вĕренекен кружоксем те кашни кунах занăтисем туса ирттереççĕ, нормăсем параççĕ. Октябĕрĕн 16-мĕшне 120 вĕренекен ГТО нормине панă. Сапожникова йулташ йертсе пынипе пĕрлешÿлĕ ташăсем, пирамидăсем, упражненисем тума вĕренеççĕ. 32 ачаран организациленĕ хĕлĕхлĕ оркестр çĕнĕ кĕвĕсем вылама вĕренет.

Кунсăр пуçне кашни класах çĕнĕрен йурăсем хатĕрлет. 8-мĕш „б" класра вĕренекенсем „Песня о родине", „Спортивный марш" т. ыт. йурăсене йурлама вĕренеççĕ. Хĕрачасенчен организациленĕ тĕрĕ кружокĕ (руководителĕ Скорнякова й.) Сталин йулташ пĕчĕк ачана тытса тăнине пир çине тĕрлĕ тĕслĕ çипсенчен тĕрлесе тăвать. Шкултах нимĕç чĕлхипе стена хаçачĕ кăларма хатĕрленеççĕ.

Халĕ класcенче социалисăмлă ăмăрту догăвĕрĕсене тĕрĕслеççĕ.

Йермишин художник шкул çине лартма салют паракан пионерпа вĕренекенсене, краснофлотеца краскăсемпе илемлетсе тăвать. Вăл ÿкерчĕксен тăршĕ—9 метр, сарлакăшĕ—4 метр пулать. Кунпа пĕрлех шкулăн алăкĕ умне Сталинпа Ленин сăнĕсене пысăк фанерă листисем çине ÿкерет. Колоннăсем валли атрибутсем хатĕрлет.

Уйава хатĕрленесси Куйбышев йачĕпе тăракан вăтам шкулта та хĕрÿлĕн пырать. Кунта физкултурă, хор кружокĕсем, хĕлĕхлĕ тата шавлă оркестрсем организациленĕ. Шкулти комиççи классенче, отрйадсенче хатĕрленÿ ĕçĕ мĕнле пыни çинчен час-часах тĕрĕслесе тăрать.

Октябĕрти Социалисăмла Аслă революци пулнăранпа 20 çул тултарнă тĕле.

Ÿкерчĕк çинче: Ленинградри Ново-Сивковски урамĕнчи 23-мĕш № çурт. Унта 1917 çулта РСДР(б)П Нарвско-Петергофски райкомĕ пулнă. 1917 çулти август уйăхĕнче çак çуртра РСДР(б)П VI-мĕш сиесĕн чылай ларувĕсем пулса иртнĕ.

(Сойузфото).

Металлиссем уйав умĕн

Шупашкарти „Металлист" промысла ертелĕн механически заводри рабочисемпе инженерла-техникла работниксем тата служăщчисем Октябĕр уйавне производствăра пысăк ÿсĕмсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Кашни станок, верстак патĕнче хĕрÿлĕ ĕç пырать, кашни рабочи производствăра тата общĕствăла ĕççенче малти вырăна тухассишĕн пысăк кăмăлпа пĕтĕм пĕлÿлĕхне ĕçе хурса ĕçлет.

Заводра Октябĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмла ăмăртăва хутшăнман пĕр рабочи те çук. Ăмăртăва пĕлсе йĕркеленĕ хыççăн рабочисем лайăх пахалăхсем кăтартма пуçларĕç. Пайанхи куна заводра нормăна тултарайман рабочи çук. Стахановла ĕçлекенсен хисепĕ ÿсе пырать. Заводра 90 çын ытла ĕçлеççĕ пулсан, стахановецсем 22 çын, ударниксем 18 çын шутланаççĕ. Стахановецсен хисепĕнче тăракансем пурте нормăна 150 процентран кайа мар тултараççĕ. Октябĕрĕн пирвайхи çуруйăхĕнчи нормăна И. Йерошин—370 процент, Кадидинцев—278 процент, Петровпа Родионов—273-шер процент, Маланычев слесарь—208 процент, Терентйев—172 процент тултарнă. Рабочисем çакнашкал лайăх ĕçленине пула завод çулталăк хушшинче 695 пин тенкелĕх автомобилсем йусас вырăнне октябĕрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 711 пин тенкĕлĕх йусанă.

Аслă Совета суйласси çинчен саккун тухнă хыççăн рабочисем тата та пысăк хастарлăхпа ĕçлеме тытăнчĕç. Кашни производствăра стахановла ĕçлессине общĕствă ĕçне активлăн хутшăнса ĕçленипе çыхăнтарса пыма тăрăшать. Кадидинцев йулташ клуб ĕçне кăтартулă тăвасшăн, Йерошин йулташ профсойуз комитечĕ тавра актив ытларах йăваçтарса пĕтĕм ĕçе анăçлăн туса пырасшăн, Терентйев йулташ уйав тĕлне пилот пуласшăн кĕрешет. Йерошин пур стахановецсене те профсойуз комитечĕ тавра пĕтĕçтернĕ. Общĕствăлă ĕçе хутшăнман стахановецсем сахал кунта.

Аслă Совета суйламали Положенине вĕренес ĕç те ăнăçлăн пырать. Тăвата кружок организацилесе пур рабочисене те вĕренĕве йавăçтарнă. Кил хуçи хĕрарăмĕсене вĕрентме уйрăм кружок организациленĕ.

Ку заводра суйлав кунĕ тĕлне хут пĕлмен çын пулмаст. Халĕхи вăхăтра хут сахал пĕлекенсем 3 çын пур. Вĕсем Крупскайа йачĕпе тăракан шкула вĕренме çÿреççĕ. Пĕр хутла пĕлмен çын пур, ăна та вĕрентетпĕр, тет Йерошин йулташ.

Çапла ĕçлеççĕ, вĕренеççĕ ку заводри рабочисем.

М. Титов.

„Красный Кустарь" ертел ăмăртура

Шупашкарти Чăвашпромсойуз системине кĕрекен „Красный кустарь" ертел Октябĕр праçникĕ умĕнхи социалисăмла ăмăртăва хутшăнса, çулталăкри ĕç планне октябĕрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 101,3 процент тултарчĕ. Ертел Октябĕр революци 20 çул тултарнă çĕре планран ирттерсе тата 102 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларма хăй çине обйазательствă илчĕ.

„Красный кустарь" ертелри култработница—Бугилникова.

Пĕлĕш-тантăшсем пĕрпĕрне хÿтĕлеççĕ

Пирĕн „Хĕрлĕ Октябĕр" колхозра (Шăхасан районĕ) çемйелĕх пуç пулса тăчĕ. Колхоз председателĕнче Д. М. Матвейев ĕçлет. Вăл ĕлĕкрех Н. Йемелйанов кулакпа пĕрле патент тытнăскер тата пĕр вăхăтра сасăсăр та пулнă. Матвейĕв колхоз председателне кĕрсен колхозра пур ответлă ĕççене те хăй таван-пĕлĕшĕсене лартса тухрĕ. Ака хал, унăн кумăшĕ, Н. Йемелйанов кладовщик пулса ĕçлет, хăйматлăх кĕрÿшĕ, Йефремов Гр.—1-мĕш бригадăн бригадирĕ, пуçани—завхоз, 5-мĕш бригадăн бригадирĕ—хурăнтăшĕ. Кунсăр пуçне тата колхоз тыррине çу… тарнă Александров Герасим, ш… чăксăр çын, аслă конюхра ĕçле… Ревизи комиççи председателĕнч… Воскресенский—пуп тăврашĕ.

Çакăн пек çемйелĕхрен колх… вăйланса пырасса кĕтме й… Колхозра çитменлĕхсем пит нум… Анчах çак çынсем пĕр-пĕрин çи… менлĕхĕсене пытарса, хÿтĕл… пыраççĕ. Тырă çĕрни те, кол… пурлăхне вăрланипе салатни сахал мар пулнă. Учот тавра… çук. Счетовод йалан ÿсĕр çÿр… Районран килсе тĕрĕслемесĕр… рĕн колхозри çитменлĕхсене, т… çав çитменлĕхсен тĕп сăлтавĕ… çемйелĕхе пĕтерме хĕн.

Колхозни…

Хаваслă тантăшсем

Микихверпе Ваçça пĕр сасă кăлармасăр вучах умĕнче ăшăнса ларассĕ. Захар кăмака çинче ура сырса ларать.

Пўртре сивĕ те мар. Кичем. Чўрече кантăкĕсем шăнса ларнă. Пўрте хĕвел çути кĕмест. Пĕренесем хушшинчи мăксем насарса кайнă. Тулта сивĕ çил хăрушшăн улать. Тăман вĕçтерет.

Захар çил уланипе чылай вăхăт итлесе ларнă хыççăн кăмака çинчен сиксе анчĕ.

— Захар, ме, çаксене çксе йар та... пуçтарма кайатăн пулĕ. Урăх çимели нимĕн те çук, — тесе вучахра кăмрăкланса пиçнĕ икĕ çĕрулми тыттарчĕ Захара 15 çулхи пиччĕшĕ. Захар хăйне панă çĕрулмине тăварпа пуçса çикелерĕ те йал тăрăх ыйткалама тухса кайрĕ. Чи малтан хăйсемпе хирĕç пурăнакан Петтасем патне кĕчĕ.

Захар халиччен пек савăнăçлă мар. Вăл çĕлĕкне хывнă те, алăк çумне çурăмĕпе тайанса именчĕклĕн пăхса тăрать. Хăйĕн тантăшĕ Пеття çăнăран тытса тĕпелеле сĕтĕрме пуçласан, чăтса тăраймарĕ, салхуллă сасăпа:

— Епĕ выљăма килмен, — терĕ.

— Мĕн тумалаччĕ? йапала илме-и? — ыйтрĕ Петтăн ашшĕ.

Захар хăй мĕн тума килнине хăйса калаймарĕ, алăка уçса тухса кайма тăчĕ; — анчах ăна алăкран кĕрекен Ульйана аппăшĕ тытса чарчĕ:

— Мĕн тумалаччĕ? йапала илме-и?

Захар каллех пим чĕнмесĕр тăчĕ. Хурланчĕ, кăмăлĕ хуçăлнипе унăн куçĕсенчен куççуљ тумламĕсем шăпăртатма пуçларĕç.

— Ыйткалама... — терĕ йулашкинчен вăл макăрнă сасăпа.

Татук инке унăшкил вилсĕ хыççăн, çултăн çул начар пурăнма пуçланă. Кулаксем патĕнче тарçă пулса канăçа пĕлмесĕр ĕçленĕ.

Темĕн чухлĕ ĕçлесен те тăлăха тăрса йулнă ачисене çителĕклĕ пурнăçпа усрама пултарайман. Выçă антраса пурлăçуклă выљăхĕсене сутса пĕтернĕ. Кайарахпа выљăх витине те пĕр пуйана сутса йанă.

— Пур-пĕрех ĕнтĕ пирĕн картишне выљăх килсе кĕрес çук, — тенĕ вăл.

Хăй йалти пуйансен ĕçĕсене туса пурăнма пуçланă. Ачисем çулла кĕтўре, хĕлле ĕçта кирлĕ унта работникре пурăннă. Çапах та пурнăç йусанмасăр пынă. Пĕр йухăннă пурнăçа тепĕр хут урă çине тăратма йăвăр пулнă.

— Сирĕн асу Атăл тăрăх грузчикре, тĕнче вăрçинче пушаланса çўренĕ хыççăн йун сурса вилчĕ. Вăл вилчĕ те, упăн пуши те пĕтрĕ. Халĕ ĕнтĕ пĕтĕм йăвăрлăха манăн тўсмеле. Сире мĕнле пăхса ўстерем, — час-часах сапла каласа макăрнă Татук инке.

— Ан йĕр, анне, есĕ йĕрнине курсан пирĕн те йĕрес килет.

— Епĕр ўссе çитсен лайăхрах пурăнма пуçлăпăр, — çапла каласа йăпатнă ачисем.

1930 çулта Татук инке хăйĕн çемйипе чи малтан колхоза çырăннă. Вара унăн пурнăçĕ çулрап çул йусанма пуçланă. Вăл ĕçлеме хăнăхнăскер, колхозра та нумай ĕçленĕ. Тырпул нумай илме тытăннă. Хăй колхозра ĕçленĕ, ачисем вĕренме саланса пĕтнĕ. Вăл ачисем вĕреннипе савăннă.

Савăнма сăлтавĕ пулнă, — унăн ачисене, ĕлĕк тарçăра çўренĕскерсене, совет влаçĕ пĕр тўлевсĕр вĕрентет. Колхоз çĕнĕ пўрт туса пачĕ, ĕне туйантарчĕ. Халĕ вăл, Татук инке, пуйан пурнăçпа пурăнма пуçларĕ.

Хурăнвар йалĕн аслă урамĕ тăрăх вĕçтерсе пыракан автомобил Вăтакасри вицĕ чўречелĕ пысăк пўрт умĕнче чарăнчĕ. Кабинкă ăшĕнчен шурă чусăпкăлă, хура паљтолă, вăтам пўлĕ çын тухрĕ.

— Çаксем пулатпăр епĕр, — терĕ вăл шофĕре.

— Çук, епĕ чăрмантарса тăмăп, Никифор Петрович...

— Айда, айда, — шофĕре çавăтсах кĕрсе кайрĕ.

Пўртре çутă, урайĕ сăрлă, стенасене çулпуçĕсен сăнĕсемпе илемлетнĕ. Сĕтел çинче икĕ ретлĕ хуткупăс ларать.

Чăлантан Татук инке тухрĕ.

— Е-е, есĕр килнĕ... Епĕ колхоз машинĕ тесе... — ним тума пĕлмесĕр ывăлне ыталаса илсе чуптурĕ. Куçĕсенчен куççуљ шăпăртатса тухрĕ. Микихвер амăшĕ йĕрнине ĕлĕк те нумай курнă, анчах савăнса макăрнине пĕрремĕш хут курчĕ.

— Анне, есĕ йĕретĕн мар-и?

— Ах, ывăлăм! Тем пулать вара çапла, халĕ сире курсан савăннипе чăтаймасăр макăрса йатăм. Пайан канмали кун, тет те-ха, Захар та килнĕ.

— Вăл ăçта тата? — васкавлăн ыйтрĕ Микихвер паљтопе хывнă май.

— Ваçça патне фермăна карĕ. Часах килессĕ пуљ, апат пиçрĕ, — терĕ амăшĕ.

Татук инке чупса çес çўрет. Апат хатĕрлет.

— Никифор Петрович та килнĕ, — хавасланса карĕç Захарпа Ваçça пўрте кĕрсенех. Хыттăн чăмăртарĕç вĕсем пиччĕшĕн аллине. Тутлă сăмахсем шĕкĕлченме пуçларĕç.

— Апатланма пуçличчен кăштах каласа илер-ха, — терĕ Татук инке, сĕтел хушшинче ларакансене пурне те. Унтан малалла каласма пуçларĕ.

— Епĕ, ачасем, есĕр пĕчĕккĕ чухне çакăн пек савăнса пурăнассине ĕмĕтленмен те. „Тухман чупа ирĕксĕр туртса кăлараймастăн çав“ тесе вилĕм лекменшĕн тăрăхаттăм. Халĕ 52 çулхи пуçăмпа хуйхă-суйхă çинчен манса кайрăм. Лайăх пурăнма пуçларăмăр, ачасем. Халĕ пурте çителĕклĕ. Кăçал хам 200 ытла, Ваçça 470 ĕçкунĕ тунă. Сахалтан та 250 пăт тырă лекет...

— Тĕрĕс, анне, ытармала мар лайăх вăхăтра пурăнатпăр, — терĕç ывăлĕсем.

— Çавна калатăп та... Ĕлĕк кĕтў кĕтнĕ, ыйткаласа çўренĕ. Çапах тăраничче сăкăр çисе курман. Халĕ пыр та кур манăн ывăлăмсене: пĕри — артис, тепри — стахановец, ĕçне кура çуллен преми илет, кĕçĕнни, кăçал учитле вĕренсе тухрĕ. Ма савăнас мар?..

Ваçça хăйне преми шучĕпе панă хуткупăсĕпе „Хавáслă тантăшсен йуррице“ выљăма пуçларĕ. Микихвер сăмахĕсене каласа йурлама тытăнчĕ. Унтан ыттисем те хутшăнчĕç. Йурă хытăран-хытă йанрама пуçларĕ.

Уçă савăк йурра йурлама та,
Вăл нихçан та хуçмасть кăмăла.
Йурăна йуратать пуркас-йал та,
Йурăна йуратать халљ пур хула.

З. Иççанов.

Икĕ колхозри тĕслĕхсем

ИШЛЕЙ. Тарăнçырма йалсоветне кĕрекен „Комбайн“ тата „Ракета“ колхозсем Октябĕр революцин 20-мĕш çулхи уйавне çитĕнўсемпе кĕтсе илессишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе пыраççĕ. Çак асăннă колхозсем ăмăртăва хутшăнса чылай ĕçсемпе лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

„Камбайн“ колхоз патшалăха тырă парас обйазательствăна çентаберĕн 1-мĕшне, натуроплатă парассине çентаберĕн 19-мĕшне тултарнă. Çавăн пекех „Ракета“ колхоз та патшалăха тырă тăратассине, натуроплатă тыррине çентаберĕн 3-мĕшне тултарнă. Патшалăха 12.34 центнер сўс-кантăр парас вырăнне 13.34 центнер, кантăр вăрри 137 килограм вырăнне, 140 килограм парса, октаберĕн 1-мĕшне тултарнă. Анчах „Комбайн“ колхоз патшалăха сўс-кантăр тăратассипе кайа йулса пырать-ха.

Кĕрхи çĕртме туса хăварни тырпул тухăçне хăпартать. Çакна шута илсе „Комбайн“ колхоз кĕрхи çĕртме сухине 180 гектар, хура çĕртме 42 гектар, „Ракета“ колхоз кĕрхи çĕртме 124, хура çĕртме 15 гектар октаберĕн 1-мĕшне туса хăварнă.

„Ракета“ колхоз Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинче те лайăх хутшăнса ĕçлерĕ. Пурĕ 1113 кубла метр тăпра чавса купаланă. Чукунçул строителствинче 15 çынтан организациленĕ бригадă (бригадирĕ Алексей Кольцов) лайăх ĕçлесе пычĕ. Ку бригадă стахановла вунă кунлăхра хăй çине илнĕ плана ытлашшипех тултарнă пулин те, халĕ татах ĕçлет.

Тарăнçырма йалсоветне кĕрекен колхозсенче çилос хывассине хаклаймаççĕ-ха. „Комбайн“ колхоз планпа 100 тоннă хывас вырăнне, ... тоннă, „Ракета“ колхозра 10 ... кăна хывнă. „Комбайн“ колхозра комсомолецсем çилос хывмали шăтăка алтса хатĕрленĕ, анчах пĕрремĕш бригадăн бригадирĕ П. Иванов çилос тултарассине хăй чарса тăнă. Çавнашкалах авăн çапас ĕçе те вĕçлемен-ха.


Йалсоветне кĕрекен колхозсенче культурăлă-массăлă ĕç çителĕклĕ пулса пымасть. „Ракета“ колхозра ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали Положенине вĕренмели кружоксем çителĕклĕ ĕçлемеççĕ. 131 çынна кружоксене хутшăнтармала пулнă, çуррине те хутшăнтарман. Вулав çурчĕн пуçлăхĕ Краснова ку ответлă ĕçе хăй çине илесшĕн мар. Вăл каланă тăрăх — вулав çурчĕн пуçлăхĕ ĕçсем мĕнле пынине тĕрĕслекен çын кăна пулмала. Çавăнпа та вăл „Ракета“ колхозра суйлав саккунне пĕрре вуласа кăтартнипех заљатисене иртернĕ тесе шутлать. Паллах ĕнтĕ, колхозниксем вĕренекен кружокра суйлав саккунĕ çинчен вуласа кăтартнипех çителĕклĕ мар.

Аслă Октябĕр революцийĕ пулнăранпа 20 çул тултарнă тĕле кăçалхи вăйлă тырпул туса илес ĕçре кĕрешекен стахановецсен йышĕ нумай ўсрĕ.

Колхозăн гектартан тырă мĕн чухлĕ тухнине шута илнĕ хыççăн, малтан шутласа пăхнă тăрăх, кашни ĕçкунĕ пуçне 8 килограм ытларах тĕш тырă, 3 килограм çĕрулми тивмеле. Çапла вара колхозри паллă стахановецсем пĕр пĕччен ĕçленипех çĕршер пăт ытла тĕш тырă илессĕ.

„Комбайн“ колхозри Й. Миронов 61 çулхи старик, 287 ĕçкунĕ тунă, Г. Кузнецов семйи — 500, С. Орудин семйи — 500 ĕçкунĕ ытла ĕçленĕ. Колхозра ĕçкунĕ пуçне ыраш 7 килограм, тулă 2,5 килограм, пăрçа-йасмăк 0,5 килограм тивет. Çапла Кузнецовпа, Орудин семйисем 300 шер пăт, Миронов пĕччен 180 пăта йахăн тĕш тырă илет.

Г. Щербаков.



Испанири фронтсенче. Республикă çарĕ кунсеренех тĕреклĕнсе пырать. Халĕ ăна пăлхавçăсемпе кĕрешме пуçланă вăхăтри çарпа нимĕнле те танлаштарма çук. Унăн боецĕсемпе командирĕсем лайăх тумланнă, вăрçă ĕçне вĕренсе çитнĕ, кучуххехи вăрçă техникипе пĕтĕмĕшпех алла илсе пыраççĕ.

Ўкерчĕк çинче: Республикă çарĕн боецĕсем.

(Союзфото).

Ейве—Алехин матчĕ

Лейденра (Голланди) октаберĕн 21-мĕшĕнче пĕтĕм тĕнчере малти вырăна тухассипе пыракан Ейвепе Алехин хушшинчи шахмăт матчĕн саккăрĕмĕш партине выљанă.

Шуррисемпе Алехин выљанă. Вăл 25-мĕш ходра партине выљаса илнĕ.

Çапла вара саккăрĕмĕш парти хыççăн 5:3 шутпа Алехин çĕнтернĕ (Алехин тăвата парти выљаса илнĕ тата икĕ парти ничйапа пĕтнĕ).

(ТАСС).

Ботвинник—Левенфиш матчĕ

Октаберĕн 21-мĕшĕнче ССР Союзĕнче малти вырăна тухассипе пыракан шахмăт матчĕн саккăрăмĕш партине выљаса пĕтернĕ. 68-ш ходра Левенфиш паранна.

Саккăрăмĕш парти хыççăн 4:2 шутпа Ботвинник çĕнтернĕ.

Октаберĕн 22-мĕшĕнче матчăн тăххăрĕмĕш партийĕ пулать.

(ТАСС).

ССР Союзĕн прокуратуринче

1937 çулхи ийунь уйăхĕн вĕçĕнче ССР Союзĕн Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсем ССР Союзне йутçĕршыв турисĕсем пек пулса Швейцарин Шильд Макс тата Лессў Жозеф йатпа çырнă суйа паспăрчĕсемпе разведкăлă тата диверсилĕ ĕçсем тума килнĕ „Гестапо“ агенчĕсене Зильбергори Пауља, Клейн Ервина арĕсленĕ пулнă.

Следствипе çакна палăртнă: Зильбергори Пауља (вăлах Шильд Макс) Германи разведки агенчĕ туса 1930 çулта пирвайхи хут йутçĕршыв специалисĕ пек кăтартса ССР Союзне шпионла ĕç тума йанă пулнă. Зильбергори пĕр йутçĕршыв консульствин официаллă сотрудникĕсен заданипе вĕсем урлă хăй пухнă секретлă материалсене тăратса шпионла ĕçсем тунă. Çакăншăн ăна 1936 çулхи нойаберте ССР Союзне урăх кĕме чарса ССР Союзĕнчен кăларса йанă пулнă. Зильбергори Пауљ ССР Союзне кĕме чарнă пулин те йутçĕршывра Шильд Макс йатпа Швейцарин суйа паспăртне илсе тепĕр агентпа Клейн Ервинпа (вăлах Лессў Жозеф) пĕрле 1937 çулхи ийунь уйăхĕнче ССР Союзне килнĕ. Вĕсене пĕр йут государствă дипломатилĕ представителствин сотрудникĕсемпе çыхăну тытма тата вĕсем шпионла диверсилĕ ĕçсем тума хушнине пурнăçлама хушнă.

Ĕçе следстви туса пĕтернĕ, ăна пăхса тухма ЛВО Çар трибуналне параççĕ.

Айăплаканĕ çар аслă прокурорĕн заместителĕ — ССР Союз прокурорĕн помошникĕ Гродко йулташ пулать. Защитниксен Коллеги членĕ Сомински йулташ хўтĕлет.

(ТАСС).

ХРОНИКĂ

* ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ В. И. Межлаук йулташа ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместительне тата ССР Союзĕн Государства План Комиççин председателне çирĕплетнĕ.

* ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ А. Д. Брускин йулташа Машиностройени Халăх Комиссарне çирĕплетнĕ.

* ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ В. И. Межлаук йулташа, вăл урăх ĕçе куçнă пирки, Машиностройени Халăх Комиссарĕнчен хăтарнă.

(ТАСС).

Тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем

Францири суйлавра халăх фрончĕ çĕнтернĕ

Францире кантонсенче суйлавăн иккĕмĕш турĕнче халăх фрончĕ çĕнĕ çĕнтерў тунă. 1936 çулта пулса иртнĕ парламент суйлавĕнче халăх фрончĕ пысăк çĕнтерў тунă пулсан, хальхи суйлавра çĕнĕрен пысăк çĕнтерў тунă. 1936 çулти суйлавра сылтăм (реакцилĕ) партисен кандидачĕсемшĕн сасăланă суйлавçăсенчен чылайĕшĕ кăçалхи суйлавра халăх фрончĕ тăратнă кандидатсемшĕн сасăланă.

Францири кантонсенче генеральнăй советниксем пурĕ 1.521. Çав 1521 мандатран 848 мандачĕ, урăхла каласан, 55,7 проценчĕ халăх фронтне кĕрекен партисен аллинче, суйлавăн малтанхи турĕнче пĕтĕм суйлавçăсенчен 58,94 проценчĕ халăх фрончĕ тăратнă кандидатсемшĕн сасăланă. Халăх фронтĕнче тăракан партисем 1931 çулта кантонсенчи суйлава танлаштарсан çеç мар, 1936 çулти парламент суйлавĕпе танлаштарсан та, нумай сасă пулнă.

Коммунистсен парти пысăк çитĕнўсем тунă. Ку таранччен генеральнăй советниксенче коммунистсен 10 мандат, округри советниксенче 23 мандат пулнă пулсан, халĕ вĕсен генеральнăй советниксенче 41 мандат, округри советниксенче 61 мандат пур. Компартишĕн панă сасăсем нумайланнă. „Йуманите“ хаçат çырса пĕлтернĕ тăрăх, 52 департаментра коммунистсем 814.495 сасă пухнă. Çав департаментсенче 1936 çулта коммунистсем 794.058 сасă илнĕ пулнă. Сасăламасăр иккелĕнсе тăнисем пĕтĕм суйлавçăсенчен 10 процент ытла пулнипе, кăçалхи суйлавра Париж хулипе пĕрле Сена департаменчĕ хутшăнманнине шута илсен, коммунистсен партин çитĕнĕвĕсем тата пысăк пулмали пуриншĕн паллă пулса тăрать. Мĕншĕн тесен, 1936 çулхи суйлавра коммунистсен парти илнĕ пĕтĕм сасăсенчен чĕрĕкне çак Сена департаментĕнче илнĕ. Кăçалхи суйлавра компарти генеральнăй тата округри советниксене суйлама пурĕ 2.800 кандидат, çав шутран 600 хресчене тăратнă. 1931 çулта компарти пурĕ те 700 кандидат çеç тăратнă пулнă. Чылай вырăнсенче коммунистсен партийĕ хăйĕн кандидачĕсене пĕрремĕш хут тăратнă. Коммунистсен парти тунă çитĕнў компартин влийанийĕ Францири провинцисенче вăйланса пынине кăтартать.

Социалисла парти те иртнĕ суйлавринчен нумай мандат илнĕ. Социалисла парти иртнĕ суйлаврипе танлаштарсан, генеральнăй советниксенче 71 вырăн, округри советниксенче 84 вырăн ытларах илнĕ. Радикал-социалистсем чылай мандат çухатнă, анчах та 1936 çулхи парламент суйлавĕнче çухатнинчен сахалтарах çухатнă.

Кантонсенчи суйлавра халăх фрончĕ пысăк çитĕнў туни, Франци фашисăмне çĕнтернине пĕлтерет. Фашисла лиги—де ла Рокăн „Францири социальнăй партийĕ“, Дорион „Франции халăх партийĕ“ суйлавçăсен чылай пысăк массине хăйсен йенне çавăрма хăтланнă. Де ла Рок суйлавра „Францири социальнăй парти“ тĕлĕнмеле çитĕнў тăвать тесе мухтанса каланă. Анчах та фашистсен пуçлăхĕсем мухтанса калани ĕçе кĕмен. Ренегат Дорион „партийĕ“ генеральнăй советникĕн икĕ мандат, де ла Рок фашисăн „партийĕ“ 14 мандат çеç илнĕ. Çак партисемшĕн суйлавçăсем питĕ сахал сасăланă.

Халăх фронтне хирĕç тăракан партисенчен: независимый радикалсем суйлавра 26 мандат, „сулахай республиканцăсем“ 34 мандат тата 200 пин суйлавçă çухатнă. Вĕсем иртнĕ суйлавра илнĕ мандатсенчен ку суйлавра нумай сахал мандат илнĕ. Халăх массисем çак центрисла партисем хыççăн кайман.

Реакци суйлав умĕн халăх фрончĕ çине темĕн пек тапăннă пулин те, çийеле тухайман, пурпĕрех ăна халăх фрончĕ çĕнтернĕ. Реакцилĕ хаçат-журналсем халăх фрончĕ çинчен елек сарнă, промышленниксем сабогаж организациленĕ, тавар хакне йури ўстернĕ, франк хакне йўнетме тăрăшнă, провокацилĕ ĕçсем тунă. Çаксене вĕсем халăх масси умĕнче халăх фрончĕн йатне çĕртес шутпа тунă. Реакци радикал парти йенче тăракан суйлавçăсене халăх фронтĕнчен уйăрма хăтланнă.

Анчах ку тĕлĕшпе вĕсем темĕн пек тăрăшнă пулсан та, фашистсен нимĕн те тухман. Радикал-социалистсен партин сылтăм йенчисем (Рош, Доминих, Мило т. ыт. те) халăх фронтне хирĕçле пулнă пулин те, вĕсем суйлавçăсене хăйсен йенне çавăрайман.

Чылай вырăнсенче халăх фронтне кĕрекен партисем дисциплинăна çирĕппĕн тытса пырайманнине те палăртмала. Суйлавăн малтанхи турĕнче халăх фронтне кĕрекен пĕр партин кандидачĕ чи нумай сасă илнĕ пулсан, ыттисен хăйсен кандидатне спискăран кăлармала пулнă. Халăх фрончĕн комитечĕн тивĕçлĕ кăтартуне тата халăх фронтне кĕрекен партисем чĕнсе каланине пурте пăхăнса пынă пулсан, коммунистсен парти тата ытларах мандат илме пултарнă.

Кантонсенчи суйлавсенче Франци халăхĕ хăй кам йенче тăнине уççăн кăтартса пачĕ. Çĕршыв халăх фрончĕн политикишĕн сасăланă. Çак халăх фрончĕ 1936 çулта пулса иртнĕ парламент суйлавĕнче те, хальхи суйлавра та реакци вăйĕсене çĕнтерчĕ.

Извещение

Общее собрание членов Чебоксарского РЖСКТ, назначенное на 24 октября 1937 года, отменяется.

Правление РЖСКТ.

Ответлă редактăр П. И. ИВАНОВ.

Шупашкарти „Кожупряжь“ ертелне *атă-пушмак çĕлекенсем, çăматă йăвалакансем, сторожсем тата уборщицăсем* КИРЛĔ.

„Кожупряжь“ ертелĕн Правленинче ыйтса пĕлмеле.

5—2. АДРЕС: Шупашкар, Ленин урамĕ, 6.

Радио пайне районсенче ĕçлеме радиотехниксем тата радиомонтерсем ВАСКАВЛĂ КИРЛĔ.

Çак адрĕспа ыйтмала: Шупашкар, Сыхăну çурчĕ, 3-мĕш хутлăх, 38 пўлĕм.

3—2.

Чăвашсен Государствă Издателствине технически редактăр КИРЛĔ.

Пичет çурчĕ, 4-мĕш хутлăх, 34 пўлĕм.

3—2.

ЧАСС Республикĕн районсенчи Çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕсене, МТС директăрĕсене, колхоз председателĕсемпе счетовочĕсене

ЧАСС Республикĕнче 1938 çулта колхозсене вальли учотпа счевордства формисене тăратмали çĕнĕ йĕрке подпискă тăрăх пулать. Кашни колхозăн, колхоз председателĕпе счетовочĕ хăйсем çине ответлăх илсе, Союзоргучотран подпискă условисене тата укçа куçармали бланк алла илнĕ хыççăн, бланк синче кăтартнă формăсен комплекчĕн хакĕ чухлĕ укçа çак адрĕспе куçармала; г. Горький, Кооперативная ул. д. № 38, Областному Отделению Союзоргучет.

Пур районсенчи Çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕсен тата МТС директăрĕсен подпискă укçине куçарнине тĕрĕслемеле.

Подпискă укçине пăхăтра куçармасăр йулнă колхозсем счетоводствă кĕнекисене тата бланксене 1938 çулта ИЛЕЙМЕÇÇĔ.

Пур районсенчи хаçатсене те çак пĕлтерўве пичетлеме ыйтатпăр.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ. Союзоргучот.

2—2

РСФСР Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссариачĕ Аптекăсен Тĕп Управленин Чăваш Республикĕнчи уйрăмĕ

Хăйĕн аптекĕсенче тата „Санитарипе гигийенă“ магазинĕсенче çителĕклĕ таран емеллĕ-кондитерлă çимĕçсем тытать—

Ўслĕкрен карамель — Эукалипто — ментоловăй, ликер драже, ачасене вальли мăйатăпа хатĕрленĕ чи лайăх çемçетекен — мармелад.

Урпаран тунă леденец, фитинлă шоколад „АРТЕК“, чернично-яблочный джем — ачасене варвиттирен хăтаракан питĕ лайăх, тутлă йапала.

Емеллĕ-кондитерлă çимĕçсене сăнаса пăхнă тăрăх Тĕпчев институчĕсем питĕ лайăх тесе мухтанă.

3—3.

Емеллекен учережденисем, ачасен больницисем, тухтăрсем, ача амăшсем тата пур граждансем

Пур аптексенче, „Санитарипе гигийенă“ магазинĕсенче „Антирахитический витамин „Д“ ыйтăр.

„Антирахитический витамин „Д“ рахит чирĕнчен питĕ хăвăрт сыватать. Антирахитический витамин профилактикă тĕлĕшĕнчен питĕ лайăх, усăлă йапала. Ун пирки тухтăрсем тата Институтсем те сахал мар мухтаса çырнă.

Чăваш Аптек управленийĕ.

Шупашкарти сасла кино-театр

1937 çулхи октаберĕн 23-мĕшĕнчен пуçласа

пăхăр та итлĕр! Сасла, илемлĕ тата тĕлĕнмеле приключенисем çинчен кăтартакан çĕнĕ филљм

„Ущелье Аламасов“

Программăра 39-мĕш № кино-журнал.

Сеанссем: 6 сех., 7 сех. 40 м. тата 9 сех. 20 мин. пуçланаççĕ

2—2 Кассă 3 сехетрен уçă.

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха —2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 799 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашгиз. Заказ № 1923. Тираж 11156.ф. 58—92 см. 1—1 п. л.